4962 Я-161

А. С. ОТАЧКИН

# ЧӐВАШ ЧӖЛХИ

ПУҪЛАМӐШ ШКУЛӐН
2-мӗш КЛАСӖ ВАЛЛИ

ЧӐВАШГОСИЗДАТ — 1951

А. С. ОТАЧКИН

# ЧӐВАШ ЧӖЛХИ

*ГРАММАТИКА, ТӖРӖС ҪЫРАССИ, ПУПЛЕВЕ АТАЛАНТАРАССИ*

ПУҪЛАМӐШ ШКУЛӐН
2-мӗш КЛАСӖ ВАЛЛИ

*Чӑваш АССР Ҫутӗҫ министерстви ҫирӗплетнӗ*

*Тӑваттӑмӗш издани*

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР

ЧӐВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар — 1951

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР
ДОСТАВЛЕН
Чувашской книжной Палате
27 декабря 1951 г.
№ 233

## ТУПМАЛЛИ.


1 §. Пирĕн калаçу . . . . . 3
2 §. Картина тăрăх калаçни . . . . . 4
3 §. Картина тăрăх каласа пани . . . . . 5
4 §. Предложени . . . . . 6
5 §. Предложени тата сăмахсем . . . . . 8
6 §. Сыпăксем . . . . . 9
7 §. Сыпăксенчен сăмахсем тăвасси . . . . . 11
8 §. Сăмахсене пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене куçарасси . . . . . —
9 §. Сасăсемпе саспаллисем . . . . . 13
10 §. Уçă сасăсемпе хупă сасăсем . . . . . 14
Вĕреннине аса илмелли ыйтусем . . . . . 15
11 §. Ыйтуллă предложени . . . . . —
12 §. Калуллă предложени . . . . . 19
13 §. Кăшкăруллă предложени . . . . . 21
14 §. Ыйтуллă, калуллă, кăшкăруллă предложенисем çинчен аса илни . . . . . 23
15 §. Пысăк саспаллисем . . . . . 25
16 § Япалана пĕлтерекен сăмахсем . . . . . 27
17 §. Пĕррелĕ хисеп тата нумайлă хисеп . . . . . 35
18 §. Япала мĕн тунине пĕлтерекен сăмахсем . . . . . —
19 §. Калавсем . . . . . 39
20 §. Япала мĕн тунине пĕлтерекен сăмахсем çинчен аса илни . . . . . 40
21 §. Япала паллисене пĕлтерекен сăмахсем . . . . . 42
Картинка тăрăх каласа пани . . . . . 45
22 §. Япаласене, япала паллисене тата япала мĕн тунине пĕлтерекен сăмахсем çинчен аса илни . . . . . 46
23 §. Хытă тата çемçе уçă сасăсем . . . . . 49
24 §. Хытă сыпăксемпе çемçе сыпăксем . . . . . —
25 §. Хытă сăмахсем, çемçе сăмахсем тата хутăш сăмахсем . . . . . 50
26 §. Çемçетекен паллă (ь) çырасси . . . . . 52
27 §. *Э, ю, я* саспаллисене çырасси . . . . . 57
28 §. *Ç, ч* хыççăн хытă сăмахсенче *ы* çырасси . . . . . 59
29 §. Уйăракан *ъ, ь* паллăсене çырасси . . . . . 60
30 §. Сăмах тĕпĕ . . . . . 61
31 §. Сăмахри ударени . . . . . 64
32 §. Янăракан хупă сасăсемпе янăраман хупă сасăсем . . . . . 66
33 §. Вăрăммăн илтĕнекен хупă сасăллă сăмахсене çырасси . . . . . 68
34 §. *Б, г, д, ж, з, о, ф, ц, щ* саспаллисене çырасси . . . . . 73
35 §. Предложени çинчен аса илни . . . . . 75
36 §. Подлежащи . . . . . 76
37 §. Сказуемăй . . . . . 77
38 §. Предложенин кĕçĕн членĕсем . . . . . 80
39 §. Вĕреннине аса илсе çирĕплетмелли ĕçсем . . . . . 82


Редактор *Н. Т. Васянка.* Тех. редактор *Н. Степанов.*

НТ 06026. Подписано к печати 16-XII-1950 г. Объем 5,5 п. л.
Заказ № 2926. Тираж 10000 экз.

Типография № 1 Чувашполиграфиздата при Совете Министров Чувашской АССР.

Гор. Чебоксары, ул. Володарского, 5.

## 1 §. Пирĕн калаçу.

# Ачасем.

Анюк амăшĕ шыв кӳме кайнă. Анюка вăл пĕчĕк Петюка пăхма хушса хăварнă. Петюк амăшĕнчен çыварса юлнă. Амăшĕ тухса кайсанах, вăл ыйхăран вăраннă. Унăн çиесси килнĕ, вара вăл йĕме пуçланă. Анюк ăна теттесем парса йăпатнă, анчах Петюк çаплах йĕнĕ. Ним тăвайманнипе аптăраса, Анюк та йĕме тытăннă.

Амăшĕ, таврăнсан:

— Мĕншĕн йĕретĕр?—тесе ыйтнă.



Анюк каланă:

— Эсĕ ытла нумай тăтăн, Петюк йĕрет. Ăна шеллесе эпĕ те йĕтĕм, — тенĕ.

— Мĕншĕн йĕрет вăл? — ыйтнă амăшĕ.

— Пĕлместĕп. Вăл калаçмасть, — тенĕ Анюк.

Амăшĕ Петюка сĕт панă та, Петюк йĕме чарăннă.

---

Петюкăн çиесси килнине Анюк мĕншĕн пĕлеймен?

Анюк мĕншĕн йĕнине амăшĕ мĕнле пĕлнĕ?

Амăшĕн сăмахĕсене тепĕр хут вуласа тухăр. Вăл Анюкран мĕн çинчен ыйтнă?

Анюк сăмахĕсене тепĕр хут вуласа тухăр. Амăшне вăл мĕн каласа панă?

Эпир сăмахсемпе калаçатпăр.

Калаçнипе, сăмахсемпе эпир хамăр мĕн шухăшланине каласа пама пултаратпăр.

### 2 §. Картина тăрăх калаçни.



Картина çинче камсене ӳкерсе кăтартнă?

Сержантăн кăкăрĕ çинче мĕн пур?

Сержанта мĕншĕн орден панă?

Сержант мĕн тăвать?

Ăна камсем итлеççĕ?

Сержант ачасене мĕн çинчен каласа парать?

Куна мĕнле пĕлмелле?

Сержант каласа панине вуласа тухăр.

## Иванов сержант каласа пани.

Иванов çартан аманса таврăннă та колхоза счетовода кĕнĕ. Унăн кăкăрĕ çинче орден йăлтăртатса тăнă. Ачасен Иванова мĕнле ĕçсемшĕн орден панине пĕлес килнĕ.

Иванов вĕсене акă мĕн каласа панă:

— Вăрçă пуçлансанах, эпĕ фашистсене хирĕç çапăçма фронта кайрăм.

Пĕрре начальник мана разведкăна ячĕ. Разведкăна эпĕ çĕрле тухса кайрăм. Мана нимĕçсем ăçта тăнине пĕлсе килме хушрĕç. Эпĕ шыв урлă пĕр сасă кăлармасăр ишсе каçрăм та нимĕçсем ăçта тăнине пĕтĕмпех

пĕлтĕм. Каялла ишсе каçнă чухне нимĕçсем мана курчĕç те пеме тытăнчĕç. Мана ураран персе амантрĕç. Анчах эпĕ ишме чарăнмарăм. Пĕтĕм вăя пухса, шыв урлă ишсе каçрăм та мĕн курнине начальнике каласа патăм. Çавăншăн ĕнтĕ мана орден пачĕç.

## 3 §. Картина тăрăх каласа пани.



Ачасем ăçта лараççĕ?
Миçен вĕсем?
Вĕсем мĕн тăваççĕ?
Пулла вĕсем мĕнпе тытаççĕ?
Çыран хĕррине вĕсем мĕн лартнă?
Витре çумĕнче мĕн ларать?
Çаксене эсир мĕнле пĕлтĕр?
Ачасем мĕн çинчен калаçнине пĕлме пулать-и?
Мĕншĕн пĕлме çук?



Ача мĕн çинчен шухăшлать?
Ăна мĕнле пĕлмелле?



Салтак мĕн вулать?
Ăна мĕнле пĕлмелле?

Çынсем хăйсен шухăшĕсене сăмахпа каласа е çырса пĕлтереççĕ.

Эпир хамăр мĕн-мĕн шухăшланине, мĕн-мĕн тунине, курнине е илтнине сăмахпа каласа е çырса пĕлтерме пултаратпăр.

Калаçнă е çырнă чухне эпир **сăмахсене** пĕр-пĕринпе çыхăнтарса **предложени** тăватпăр.

## 4 §. Предложени.



Сунарçă пăшал перет.



Автан авăтать.



Тилĕ чăх тытать.



Асанне чăлха çыхать.



Хĕрача чечексем шăварать.



Анне кĕпе çĕлет.

---

Кунта миçе картинка? Миçе предложени?

Пĕрремĕш, иккĕмĕш, тăваттăмĕш, улттăмĕш картинкăсем айĕнчи предложенисене вуласа тухăр.

Иккĕмĕш картинка айĕнчи предложенире мĕн çинчен каланă?

Тăваттăмĕш картинка айĕнчи предложенире кам çинчен каланă?

Пиллĕкмĕш картинка айĕнчи предложенире кам çинчен каланă?

***1-мĕш хăнăхтару.*** Картинкăсем айĕнчи предложенисене йĕркипе вуласа тухăр.

Кашни **предложени** вĕçленнĕ уйрăм **шухăша** пĕлтерет.

Вуланă чухне кашни предложени хыççăн **чарăнса тăмалла**.

Предложение çырса пĕтерсен, вĕçне **точка** лартмалла.

Кашни предложение **пысăк саспаллипе** пуçласа çырмалла.

***2-мĕш хăнăхтару.*** Çак статьяна вуласа тухăр.

## Çулла.

Хĕвел хĕртсе пăхать. Хирте ыраш саралчĕ. Колхозниксем тырă вырма хатĕрленеççĕ. Ачасем урамра лапталла выляççĕ.

---

Çак статьяра хĕвел çинчен мĕн каланă?

Ыраш çинчен мĕн каланă? Колхозниксем çинчен? Ачасем çинчен?

Статьяра миçе уйрăм шухăш? Миçе предложени?



Кашни картинка тăрăх предложени туса калăр.

Кашни предложени хыççăн чарăнса тăрăр.

***3-мĕш хăнăхтару.*** Хăвăр тунă предложенисене çырса хурăр. Кашни предложени хыççăн точка лартăр.

*4-мĕш хăнăхтару.* Çак статьяна вуласа тухăр.

## Пакша йăви.

Ванюкпа Сашук вăрмана кайнă. Вĕсем вăрманта пĕр йывăç хăвăлĕнче пакша йăви курнă. Йăвине Ванюк хăпарса пăхнă. Пакши йăвинче пулман. Унта мăйăрсем анчах пулнă. Пакша мăйăра хĕлле валли хатĕрленĕ. Ачасем пакша мăйăрне тивмен.

---

Статьяра миçе уйрăм шухăш? Статьяра миçе предложени?

Çак ыйтусем çине статьяри сăмахсемпе ответ парăр:

Ванюкпа Сашук ăçта кайнă? Вĕсем вăрманта мĕн курнă? Ванюк мĕн тунă? Пакша йăвинче мĕн пулнă? Мăйăра унта кам тултарнă?

### 5 §. Предложени тата сăмахсем.

## Кĕркунне.

Çу иртрĕ. Хура кĕр çитрĕ. Кăвак пĕлĕт хупланчĕ. Хĕвел пĕлĕт айне пытанчĕ. Хирсем çаралчĕç. Кайăксем кăнтăр енне вĕçсе кайрĕç.

---

Кунта миçе предложени?

Пĕрремĕш предложенире мĕн çинчен каланă? Мĕн иртрĕ?

Иккĕмĕш предложенире мĕн çинчен каланă? Мĕн çитрĕ?

Тăваттăмĕш предложенире мĕн çинчен каланă? Мĕн пытанчĕ?

**Кашни предложени сăмахсенчен пулать.**

Пĕрремĕш предложенире миçе сăмах? Иккĕмĕшĕнче миçе сăмах? Тăваттăмĕшĕнче миçе? Улттăмĕшĕнче миçе?

*5-мĕш хăнăхтару.* Çак сăвва сасăпа вулăр.

Кун кĕскелет. Шăнкăрчсем кайнă.
Çĕр нӳрленет. Хирсем çаралнă.

Сăвăра миçе предложени? Кашни предложенире миçе сăмах?

*6-мĕш хăнăхтару.* Вăрман çинчен, шыв çинчен, лаша çинчен, ĕне çинчен, ачасем çинчен хăвăртан икшер сăмахлă предложенисем тупса калăр.

*7-мĕш хăнăхтару.* Кĕркунне çинчен, хĕл çинчен, кирек мĕн çинчен виçшер сăмахлă предложенисем тупса калăр.

## 6 §. Сыпăксем.

## Тырă вырни.

Тулă ăнса пулнă. Колхозниксем тырă выраççĕ. Машинăпа вырма çăмăл. Машина вырать, çынсем кĕлте çыхаççĕ. Ĕç ăнса пырать.

***8-мĕш хăнăхтару.*** Çак предложенисенчи кашни сăмаха сыпăкăн-сыпăкăн уйăрса çырса илĕр.

Тĕслĕх: *Ту-лă ăн-са пул-нă.*

Сăмахсем **сыпăксем** çине пайланаççĕ.

Сăмахра миçе уçă сасă, çавăн чухлĕ сыпăк пулать.

Юрланă чухне е темиçен пĕр харăс вуланă чухне сăмахсене сыпăкăн-сыпăкăн каласа пыраççĕ.



## Кавалеристсем.

Пирĕн утсем пит шухă.
Таса пирĕн утсем.
Хĕççем те пирĕн çивчĕ.
Эпир — кавалеристсем.

***9-мĕш хăнăхтару.*** Сăвăри кашни сăмаха, сыпăксем çине уйăра-уйăра, сыпăксем хушшине кĕске йĕр туртса çырса илĕр. Сăвва хорпа вуламашкăн пăхмасăр калама вĕренĕр.

# Вăйă.

## 1. Каласа пĕтер.

Ачасем çакăн пек вăйă шухăшласа кăларнă. Вĕсем сĕтел тавра ларса тухнă та çапла калаçса татăлнă: пĕрне-пĕри тутăр пăрахса парса, сăмахăн пирвайхи сыпăкне каламалла. Тутăрне илекеннин çав сыпăкпа пуçланакан сăмах тупса каламалла.



Сăпани Сашука тутăр пăрахса панă та *ти* тенĕ. Сашук: *тилĕ*, тенĕ. Унтан Сашук тутăра Альтюка пăрахса панă та *ку* тенĕ. Альтюк: *кукăль*, тенĕ. Вăл тутăра Лисука пăрахса панă та *ар* тенĕ. Лисук: *арман*, тенĕ.

## 2. Камăн сăмах ытларах?

Ачасем тата çакăн пек вăйă тупнă. Вĕсем пĕр-пĕр сыпăк каланă. Унтан пилĕк минут хушши çав сыпăкпа пуçланакан сăмахсем тупса çырса пынă. Ытларах сăмах тупса çыраканни тепĕр сыпăк каланă та вăййа çĕнĕрен пуçланă.

Малтан вĕсем *ку* сыпăкпа пуçланакан сăмахсем тупнă.

Сăпани çак сăмахсене çырма ĕлкĕрнĕ: *курăк*, *купăс, купăста, кукăль, кушак.*

Сашук çак сăмахсене çырнă: *курăс, купăс, кукăль.*

Альтюк çак сăмахсене çырнă: *кукăль*, *курăк, кучан*, *купа.*

Лисук çак сăмахсене çырнă: *курăс*, *кукăль, купăс.*

Ытларах сăмах тупса çыраканни Сăпани пулнă. Вăл тепĕр сăмах сыпăкĕ шухăшласа каланă та вăййа çĕнĕрен пуçланă.

## 7 § Сыпăксенчен сăмахсем тăвасси.

кур＼　　　／рас　　　пу＼　　　／хăр
ка　ка　　　ал—са　　　са—лат
сăп／　　　＼пан　　　ă／　　　＼рай

çă
çă-кăр
çă-мар-та

çă
çул-çă
су-нар-çă

тăр＼ ／ка
[ал]
са／ ＼сиш

кă＼ ча ／лан
|
[ар]
|
па／çын＼ман

шак＼рăк ／пăс
|
рăс—[ку]—чан
|
рак／лач＼кăль

лă＼ ／на
лăк＼ ／ла
пат／[а]＼ка
тă／ ＼ча

## 8 §. Сăмахсене пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене куçарасси.

1. Сăмахăн пайĕсене пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене сыпăкăн-сыпăкăн анчах куçарма юрать:

*кол-хоз-ник*, *ху-ла-сем*, *вĕ-ре-не-кен.*

2. Пĕр уçă саспаллине йĕркере хăварма та, тепĕр йĕркене куçарма та юрамасть; çапла куçармалла:

*япа-ла*　　　*кă-сăя*
*са-рая*　　　*учи-тель-ни-ца*

***10-мĕш хăнăхтару***. Сăмахсене çырса илĕр, вĕсене пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене куçармаллине кĕске йĕрсемпе уйăрса кăтартăр.

*Арăс-лан*, укăлча, урапа, кăсăя, асатте, асанне, енчĕк, эрешмен, юрлакан, Урине, Укахви, ăмăрту, ярапа, каюра.

Шерепе, сĕреке, анкарти, аслати, картлашка, кăпăшка, ӳпре, вăрман, сăвăслан, шăнкăрав, урпа, купăста, сакăлта.

***11-мĕш хăнăхтару.*** Çак сăвва çырса илĕр. Сăмахсене пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене мĕнле куçармаллине кĕске йĕрсемпе уйăрса кăтартăр.

Васкарĕ поезд хăвăрт-хăвăрт.
Çĕрпӳ, Канаш хыçа юлать.
Васкарĕ поезд шăкăрт-шăкăрт,—
çĕршыв столицине каять.

3. **Ъ, ь** паллăсене вĕсен умĕнчи хупă саспаллинчен уйăрса куçарма юрамасть.

Сăмахсене сыпăксем çине çапла уйăрмалла:

*конь-ки* *разъ-езд*
*кукăль-пе* *çемь-ен*

***12-мĕш хăнăхтару.*** Çырса илĕр, сăмахсенче тĕл пулакан ъ, ь саспаллисене аялтан йĕр туртса палăртăр.

Пирĕн çемьере пилĕк çын.
Эпĕ кĕсъене ытлашши япала чиксе çӳреместĕп.
Писательсем съезда пухăннă.
Пирĕн ял чугун çул разъездĕнчен инçе мар.
Вăйлă çил вĕрет, мăръере улать.

4. Хупă саспаллине ун хыçĕнчи уçă саспаллинчен уйăрса куçарма юрамасть.

Сăмахсене сыпăксем çине çапла пайламалла:

*карт-лаш-ка* *кан-тăк*
*кă-пăш-ка* *эреш-мен*

***13-мĕш хăнăхтару.*** Сăвва çырса илĕр. Сăмахсене, пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене мĕнле куçармаллине кăтартса, кĕске йĕрсемпе уйăрса çырăр.

Ĕнтĕ çулçă вĕçет йывăççем çинчен,
кĕр хĕвелĕ пăхать йăлтăр-йăлтăр.
Халь çумасть вутлă çумăр çĕршывăм çинче,
çил юрлать: Çĕнтерӳ сывă пултăр!

5. Сӑмахра икӗ пӗр пек саспалли юнашар пулсан, вӗсене пӗр-пӗринчен уйӑрса куҫармалла:

*асат-те* *ҫамрӑк-ки*
*варинк-ке* *чӑмӑрк-ка*

***14-мӗш хӑнӑхтару.*** Предложенисене ҫырса илӗр. Икӗ пӗр пек саспалли юнашар чухне сӑмахсене пӗр йӗркерен тепӗр йӗркене мӗнле куҫармаллине кӑтартса, кӗске йӗрсемпе уйӑрса ҫырӑр.

Ҫулла эпир вӑхӑта аван ирттертӗмӗр. Час-часах вӑрмана каяттӑмӑр, ҫырла, мӑйӑр, кӑмпа тататтӑмӑр. Хирте тырӑ вырнӑ хыҫҫӑн пучах пуҫтараттӑмӑр. Кулленех шыва кӗреттӗмӗр. Тӗрлӗ вӑйӑсем выляттӑмӑр.

## 9 §. Сасӑсемпе саспаллисем.

*А-рӑс-лан.*



Малтанхи сыпӑкра миҫе сасӑ? Иккӗмӗшӗнче миҫе сасӑ? Виҫҫӗмӗшӗнче миҫе?

Ҫырнӑ чухне сасӑсене саспаллисемпе паллӑ тӑваҫҫӗ. Саспаллисен йышӑннӑ йӗркине **алфавит** теҫҫӗ.

Чӑваш алфавитӗнче 37 саспалли.

## АЛФАВИТ.

**а, ӑ, б, в, г, д, е, ё, ӗ, ж, з, и, й, к, л, м, н, о, п, р, с, ҫ, т, у, ӳ, ф, х, ц, ч, ш, щ, ъ, ы, ь, э, ю, я.**

Алфавита пӑхмасӑр калама вӗренес пулать.

***15-мӗш хӑнӑхтару.*** Сӑмахсене вуласа тухӑр. Кашни сӑмахра миҫе сыпӑк? Миҫе саспалли? Миҫе сасӑ?

Рак. Упа. Ҫӑка. Супӑнь. Кровать.

Сасăсемпе саспаллисен хисепĕ пур сăмахсенче те пĕр пекех-и? *Супăнь* сăмахра миçе саспалли? Миçе сасă?

> Пĕр сăмахрах хăш чухне сасăсен хисепĕ саспаллисен хисепĕпе пĕр пек пулмасть.
>
> Хăш-пĕр сăмахсенче саспаллисен хисепĕ сасăсен хисепĕнчен ытларах е сахалтарах пулать.

***16-мĕш хăнăхтару.*** Çак сăмахсене вуласа тухăр. Кашни сăмах миçе саспаллирен тата сасăран пулнине каласа парăр.

Букварь. Кукăль. Мăя. Юпа. Хурăн. Мăкăнь.

## 10 §. Уçă сасăсемпе хупă сасăсем.

***17-мĕш хăнăхтару.*** Çак уйрăм сасăсене калăр: ***а, у, ы, м, п, к, т.***

Хăш сасăсене каланă чухне çăвар ытларах уçăлать?
Хăш сасăсене каланă чухне çăвара хупарах калатпăр?
Хăш сасăсене каланă чухне çăвартан сывлăш çăмăл тухать?
Хăш сасăсене каланă чухне сывлăш çăмăллăнах тухмасть?

> *а, ă, ĕ, и, о, у, ӳ, ы, э* сасăсене уçă сасăсем теççĕ.
>
> *б, в, г, д, ж, з, й, к, л, м, н, п, р, с, ç, т, ф, х, ц, ч, ш, щ* сасăсене хупă сасăсем теççĕ.
>
> *ъ, ь* паллăсем нимĕнле сасса та пĕлтермеççĕ.

***18-мĕш хăнăхтару.*** Çак сăмахсене сасăпа каласа тухăр. Вĕсенче *е, ё, ю, я* сасăсем мĕнле илтĕннине асăрхăр.

Яшка. Ялав. Юмах. Юрă. Енчĕк. Çемье. Мăръе. Ёлка. Мăян. Каюра.

> Сăмах пуçламăшĕнче уçă сасă хыççăн тата *ъ*-па *ь* паллăсем хыççăн *е, ё, ю, я* саспаллисем икĕ сасса пĕлтереççĕ: *е—йе, ё—йо, ю—йу, я—йа.* Çав *е, ё, ю, я* сасăсене, *й* сасăпа пĕрле илтĕннĕрен, **йотованнăй** сасăсем теççĕ, вĕсем те уçă сасăсемех пулаççĕ.

*19-мĕш хăнăхтару.* Сăвва çырса илĕр, уçă сасăсене аял-тан йĕр туртса паллă тăвăр.

Çырма юхать кĕрлесе
аслă ялăн çумĕпе.
Хĕвел, тĕрĕ тĕрлесе,
вылять унăн шывĕпе.

Тăрă шывăн ăшĕнче
кăвак пĕлĕт явăнать.
Ватă йăмра тайăлса,
тĕсне пăхса савăнать.

Авă кĕпер çийĕнче
старик ларать вăлтапа:
йăпăрт-йăпăрт пуллине
улталасшăн ăманпа.

## Вĕреннине аса илмелли ыйтусем.

Эпир хамăр шухăшсене мĕнле майпа пĕлтеретпĕр? Предложени мĕнсенчен пулса тăрать? Предложенире пирвайхи сăмаха мĕнле саспаллипе пуçласа çыраççĕ? Предложение çырса пĕтерсен, мĕнле паллă лартаççĕ?

---

Сăмахсем сыпăксем çине мĕнле пайланаççĕ? Сăмахра миçе сыпăк пуласси мĕнрен килет? Сăмахăн пайĕсене пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене мĕнле куçармалла?

Чăваш алфавитĕнче миçе саспалли? Мĕнле сасăсене уçă сасăсем теççĕ? Мĕнле сасăсене хупă сасăсем теççĕ? Мĕнле паллăсем нимĕнле сасса та пĕлтермеççĕ?

## 11 §. Ыйтуллă предложени.

Мĕнпур çутă тĕнчере
мĕнле çĕршыв телейлĕ?
— Пирĕн çĕршыв телейлĕ.
Пирĕн аслă çĕршывра—
камăн ячĕ чи чаплă?

—Сталин ячĕ чи чаплă.
Эпир, совет çыннисем,
камăн ятне манас çук?
Ленин ятне манас çук.

---

Сăвăра миçе ыйту? Отвечĕсем миçе?
Пурĕ миçе предложени?

Ыйтса каланине пĕлтерекен предложение **ыйтуллă предложени** теççĕ. Ыйтуллă предложени хыçне **ыйту палли** (?) лартаççĕ.
Ыйту палли хыççăн пысăк саспаллипе пуçласа çыраççĕ.

***20-мĕш хăнăхтару.*** Çак ыйтуллă предложенисене вулăр, вĕсене сăмахпа ответ парăр.

Тĕслĕх: *Эсĕ çыру çырма пĕлетĕн-и?—Пĕлетĕп.*

Эсĕ çыру çырма пĕлетĕн-и? Картинăсем тума пĕлетĕн-и? Сăвăсем калама пĕлетĕн-и? Юрăсем юрлама пĕлетĕн-и?

Эсĕ миçе çулта? Сирĕн ял мĕн ятлă? Сирĕн ял çывăхĕнче юханшыв пур-и? Шывĕ мĕн ятлă?

Ыйтса каланă чухне сасă хăпарать, ответ панă чухне сасă анать.

***21-мĕш хăнăхтару.*** Малтан ыйтăвне, унтан ответне вулăр. Вуласа тухсан, кашни ыйтупа унăн ответне çырса илĕр.

| | |
|---|---|
| 1. Ванюк шкулта-и? | Ванюк шкулта. |
| 2. Вăл час таврăнать-ши? | Вăл час таврăнать. |
| 3. Вăл кинона пырать-ши? | Вăл кинона пырать. |

Халĕ çырса илнĕ ыйтусене лайăхрах сăнаса пăхăр-ха. Ун йышши ыйтуллă предложенисене епле тăватпăр?

> ***И***, ***ши*** татăксене кĕске йĕрпе çыпăçтарса çыраççĕ: *вăл-и*, *шкулта-и*, *пырать-ши*.

***22-мĕш хăнăхтару.*** Çак предложенисене, малтан ыйтуллă туса, унтан ответ парса, вуласа тухăр.

Паян эпир экскурсие каятпăр. Паян çанталăк аван. Пĕлĕт тăрă. Çумăр пĕлĕчĕсем çук. Экскурсие пурте каяççĕ. Эпир вăрмантан çулçăсем пуçтарса килетпĕр.

Тĕслĕх: *Паян эпир экскурсие каятпăр-и?*
*— Паян эпир экскурсие каятпăр.*

***23-мĕш хăнăхтару.*** Çак сăвва çырса илĕр. Кирлĕ çĕре точка е ыйту палли лартăр.

Вĕтĕр-вĕтĕр вĕтĕртетсе,
кĕрхи кунта мĕн çăвать
—Кĕрхи вĕт çумăр çăвать

Çулçисене тăка-тăка,
сарă тумне мĕн хывать
—Кĕрхи вăрман тум хывать

***24-мĕш хăнăхтару.*** Ыйтусемпе ответсене çырса илĕр. Кирлĕ çĕре точка е ыйту палли лартăр.

— Пирĕн Тăван çĕршыв мĕн ятлă
— Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕ ятлă
— Пирĕн çĕршывра власть кам аллинче
— Рабочисемпе хресченсен аллинче
— Пирĕн çĕршыва кам ертсе пырать
— Коммунистсен партийĕ ертсе пырать

## Вăрмантан таврăнни.

***25-мĕш хăнăхтару.*** Картинкăна пăхса тухăр. Картинка тăрăх ыйтусене хирĕç ответ парăр.

Ачасем ăçта пулнă? (Вĕсене ятсем парса тухăр).
Ачасем вăрманта мĕн тунă?

Ачасем вăрмантан мĕн йатса таврăнаççĕ?
Вĕсем мĕншĕн йытăпа кайнă?
Пĕр ачи вăрманта мĕн тытнă?
Мулкача вăл мĕнле майпа тытнă?



***26-мĕш хăнăхтару.*** Сылтăм енче çырнă ответсене пурне те вуласа тухăр. Чухласа пĕлĕр: малтанхи ответăн ыйтăвĕ мĕнле? Иккĕмĕш ответăн ыйтăвĕ мĕнле? Виççĕмĕшĕн? Тăваттăмĕшĕн? Пиллĕкмĕшĕн? Кашни ыйтăва çырса хурăр, ыйту хыççăн ответне çырăр.

| **Ыйтусем.** | **Ответсем.** |
| --- | --- |
| 1. . . . . . . . . . . | 1. Вăрмана. |
| 2. . . . . . . . . . . | 2. Вутă касрăм. |
| 3. . . . . . . . . . . | 3. Аттепе. |
| 4. . . . . . . . . . . | 4. Пакша куртăм. |
| 5. . . . . . . . . . . | 5. Çук, тытаймарăм. |

***27-мĕш хăнăхтару.*** Çак картинка тăрăх, ыйтусем çине ответ парса, пĕчĕк калав тăвăр.

## Ачасем çунашкапа ярăнни.



Ку хăçан пулнă? Ачасем ăçта тухнă? Вĕсем миçен пулнă? Вĕсем мĕнмĕн ятлă пулнă? Тăвайкки мĕнле пулнă?

Çунашкасем мĕнле пулнă? Кашни çунашки çине миçен ларнă? Ачасем киле хăçан таврăннă? Вĕсене тăвайкки ярăнни кăмăла килнĕ-ши?

### 12 §. Калуллă предложени.

Хĕвел пĕлĕт айне пытанчĕ. Çил вĕре пуçларĕ. Çиçĕм çиçрĕ. Аслати авăтса ячĕ. Вăйлă çумăр çума тытăнчĕ.

Кунта пилĕк предложени: пирвайхинче—хĕвел çинчен, иккĕмĕшĕнче—çил çинчен, виççĕмĕшĕнче—çиçĕм çинчен, тăваттăмĕшĕнче—аслати çинчен, пиллĕкмĕшĕнче—çумăр çинчен каланă.

> Предложенире мĕн çинчен те пулин каласа пĕлтереççĕ пулсан, ун пек предложение **калуллă** предложени теççĕ.
>
> Калуллă предложени хыççăн **точка** лартаççĕ.

*Лапка-лапка юр çăвать.*
*Мулкач сикет, йĕр тăвать.*

Ыйтуллă предложени хыççăн мĕнле паллă лартаççĕ?

*28-мĕш хăнăхтару.* Малтан кĕркунне çинчен калакан предложенисене, унтан хĕл çинчен калакан предложенисене çырса илĕр.

Кунсем кĕскелчĕç. Çĕрсем вăрăмланчĕç. Колхозра авăн çапса пĕтерчĕç. Вĕçен кайăксем ăшă çĕршывсене каяççĕ. Кунĕ-кунĕпе вĕтĕртетсе çумăр çăвать. Хирсем шурă юрпа витĕнчĕç. Шартлама сивĕсем пуçланчĕç. Ачасем конькипе ярăнаççĕ. Шкулта ёлкăна хатĕрленеççĕ.

*29-мĕш хăнăхтару.* „Пăр çинче" ятлă калавăн пуçламăшне вуласа тухăр та малалла мĕн пулнине хăвăртан каласа парăр.

## Пăр çинче.

Çанталăк сивĕтрĕ. Акă пĕвери шыв та çиелтен шăнчĕ. Эпир Ванюкпа пĕве хĕррине пытăмăр. Ванюк пăр çине кĕчĕ те пăра урипе тапса пăхать. Пăр кăштах шăтăртатать, анчах Ванюка тӳсет. Ванюк пăр çине шаларах кĕрсе пырать. Сасартăк пăр шăтăр-шатăр! турĕ те...

*30-мĕш хăнăхтару.* Малтан колхоз çинчен калакан предложенисене, унтан завод çинчен калакан предложенисене çырса илĕр.

Çуркунне колхозра çураки пуçланчĕ. Колхозниксем пурте хире тухрĕç. Заводра гудок кăшкăртрĕ. Рабочисем завода ĕçе кайрĕç. Мăлатуксен сасси янăрама тытăнчĕ. Тракторсем кĕрлеççĕ. Колхозниксем хĕрсе тырă акаççĕ. Станоксем хусканчĕç. Завод кĕрлесе тăрать.

*31-мĕш хăнăхтару.* Çырса илĕр, кашни калуллă предложение çырса пĕтерсен, точка лартăр, точка хыççăн пысăк саспаллипе пуçласа çырăр.

## Хĕллехи ир.

Тул çутăлчĕ çынсем ыйхăран вăранчĕç хĕрарăмсем вут хутаççĕ мăръесенчен тĕтĕм тухать колхозниксем выльăхсене апат параççĕ шкул ачисем шкула кайма хатĕрленеççĕ.

## 13 §. Кăшкăрулла предложени.

— Асатте, юмах ярса пар-ха тархасшăн! Эсĕ мана ĕнер юмах яма пулсаттăн!

— Эсĕ, асатте, коньки тăвас тесеттĕн!

— Эсĕ мана шăхлич туса парăп теттĕн!

— Юрĕ, тăвăп коньки те, шăхлич те. Ярса парăп юмах-халапсем те.

Ачасем аслашшĕне мĕн-мĕн туса пама йăлăннă?
Аслашшĕ вĕсене хирĕç мĕн каланă?

---

Ачасем урайĕнче вылянă. Амăшĕ тепĕр пӳлĕмре кĕпе çĕлесе ларнă. Сасартăк кĕтесре темĕн кăчăртаттарни илтĕннĕ те, унтан шăши чупса тухнă.

Ачасем хăраса ӳкнĕ те кăшкăрса янă:

— Анне! Анне! Часрах кил кунта! Эпир хăратпăр!

Кама чĕнсе кăшкăрнă ачасем? Вĕсем мĕн тесе кăшкăрнă?

Предложени вăйлăн хумханса каланине (йăлăннине, тĕлĕннине, хăранине, савăннине) кăтартать пулсан, ун пек предложение **кăшкăрулла** предложени теççĕ.

Кăшкăрулла предложение кăшкăрулла сасăпа калаççĕ.

*Сывă пултăр пирĕн аслă Тăван çĕршыв!*

***32-мĕш хăнăхтару.*** Предложенисене вуласа тухăр. Вуласса сасăпа, илемлĕ те уççăн вулăр. Предложенисем хыççăн мĕнле чарăну палли лартнă? Предложенисене çырса илĕр.

Сывă пултăр Совет Çарĕ!
Сывă пулччăр Социализмлă Ĕç Геройĕсем!
Мухтав сана, Тăван çĕршыв!
Мухтав паттăр совет лĕтчикĕсене!

Кăшкăрулла предложени хыççăн **кăшкăру палли** (!) лартаççĕ.

Кăшкăру палли хыççăн пысăк саспаллипе пуçласа çыраççĕ.

***33-мӗш хӑнӑхтару***. Ҫырса илӗр, кӑшкӑрулла предложенисем хыҫҫӑн кӑшкӑру палли лартӑр.

Хӗветле, кил кунта часрах
Вӗҫ, вӗҫ, куккук, вӗҫ, куккук
Пӑрӑнӑр ҫул ҫинчен, автобус килет
Ӑчасем, апат пиҫнӗ, тӑрӑр часрах

Чӗнӳсем

Пионер, хатӗр пул!

Яланах хатӗр!

Сывӑ пултӑр Совет Ҫарӗ!

Чаплӑ, мухтавлӑ пул, ирӗк ҫӗршывӑмӑр!

Чӗнӳсене сасӑпа, илемлӗн те уҫҫӑн вулӑр.

***34-мӗш хӑнӑхтару***. Стахановецсем ҫинчен, геройсем ҫинчен, Тӑван ҫӗршыв ҫинчен хӑвӑр чӗнӳсем туса калӑр.

## 14 §. Ыйтуллă, калуллă, кăшкăруллă предложенисем çинчен аса илни.

*35-мĕш хăнăхтару.* Сăвăри кăшкăрулла тата ыйтуллă предложенисене кăтартса парăр.



Ачасем! Пурте ман хыççăн!
Харăс, харăс утăр!
Ачасем, эсир телейлĕ!
Юрлăр, харăс юрлăр!

Эпир аслă çĕршывра
чи телейлĕ мар-и?
Çав телейшĕн звенора
савăнса юрлар-и?

*36-мĕш хăнăхтару.* Çак калава вуласа тухăр. Калаври ыйтуллă, калуллă, кăшкăруллă предложенисене кăтартса парăр.

Калаври предложенисем хыççăн мĕншĕн е ыйту палли, е точка, е кăшкăру палли лартнине ăнлантарса парăр.

## Хăраманскер.

Сергейпе Павăл вăрмана каяççĕ. Сергей Павăлтан ыйтать:

— Павăл, эсĕ кашкăрсенчен хăратăн-и?—тет.

Павăл мухтанать:

— Мĕн хăрамалли пур вĕсенчен! Чукмарпа парăп та вĕлерĕп,—тет.

Вăрмана кĕчĕç хайхисем. Павăл хыçалалла çаврăна-çаврăна пăхса илет. Сергее аллинчен яра-яра илет.

Сергей Павăла хăратма юриех хыттăн кăшкăрса ячĕ:
— Кашкăр!
Павăл хăранипе пĕшкĕнсе ларчĕ те çухăрать:
— Анне!
Сергей унтан кулать:
— Эх, Павăл, хăраманскер,—тет.

*37-мĕш хăнăхтару.* Çак шўте вуласа тухăр, унтан çырса илĕр. Кирлĕ вырăна точка е кăшкăру палли лартăр.

## Упапа сунарçăсем.

Икĕ сунарçă сунара кайнă. Вĕсенчен пĕри упана тĕл пулнă та юлташне чĕнет
— Макар, упа тытрăм
— Çавăтса кил эппин
— Пырасшăн мар вăл
— Апла пулсан, ху кил
— Хама та ямасть

*38-мĕш хăнăхтару.* Хăвăр тĕллĕн калуллă, ыйтуллă, кăшкăруллă предложенисем тупса çырăр.

*39-мĕш хăнăхтару.* Çырса илĕр, предложенисем хыççăн кирлĕ чăрăну паллисем лартăр.

— Чи-чи кăсăя
Ăçта каян, кăсăя
— Кантăр вăрри вăрлама
— Е хуçи курсассăн
— Тарăп хăпарăп хыр тăрне.

*40-мĕш хăнăхтару.* Çак предложенисене вуласа тухăр, унтан çырса илĕр. Кашни предложени çине вăл мĕнле предложени пулнине (калуллă-и, ыйтуллă-и, кăшкăруллă-и) паллă тăвăр.
— Палюк, ăçтан таврăнатăн?
— Пионерсен лагерĕнчен.
— Аван пăхрĕç-и унта сире?
— Эх, аван пăхрĕç-çке! Кунне тăваттă апат çитеретчĕç. Тĕрлĕ вăйăсем вылямa, юрăсем юрлама вĕрентрĕç.

## 15 §. Пысăк саспаллисем.

Саспаллисем **пысăккисем** тата **пĕчĕккисем** пулаççĕ. Пысăк саспаллине предложени пуçламăшĕнче çыраççĕ.

***41-мĕш хăнăхтару.*** Çырса илĕр, кирлĕ çĕре точка лартăр, точка хыççăн пысăк саспаллипе пуçласа çырăр.

## Хирте.

Çуркунне хирте çўреме лайăх колхозăн хирĕ аслă тырă калчисем илемлĕн ешерсе лараççĕ хĕвел йăлтăртатса пăхать çўлте тăри юррине шăрататать калча хушшинче путене авăтать эпир чечексем тататпăр.

***42-мĕш хăнăхтару.*** Çырса илĕр, кирлĕ çĕре точка е ыйту палли лартăр тата пысăк саспаллипе пуçласа çырăр.

— Ванюк, киле каятпăр-и

— Çук-ха, Мишша, манăн стена хаçачĕ кăлармалла

— Эппин Якку та пыраймасть Эпир Санюкпа иксĕмĕрех кайăпăр.

Çынсен ячĕсене, ашшĕ ячĕсене, хушамачĕсене пысăк саспаллипе пуçласа çыраççĕ.

Сăмахран:

*Александр Сергеевич Пушкин.*
*Михаил Юрьевич Лермонтов.*
*Константин Васильевич Иванов.*

***43-мĕш хăнăхтару.*** Сăвва вуласа тухăр. Малтан хĕрача ячĕсене, унтан арçын ача ячĕсене çырса илĕр.

Хĕлле тăвайкки хĕррине
ушкăн ача пухăннă.
Куçук, Ваççа, Кĕтерне
çунашкапа ярăннă.
Петюк, Альтюк, Урине
йĕлтĕрпеле ярăннă.
Анна, Иван, Сăпани
коньки сырса тухнă та
пĕве çинчи пăр тăрăх
ярлаттарса шăвăннă.

***44-мĕш хăнăхтару.*** Хăвăр ята, аçу ятне тата хушамата çырăр. Аçу, аннӳ ячĕпе хушаматне çырăр.

***45-мĕш хăнăхтару.*** Аялта кăтартнă пек, çитес эрне валли дежурнăйсен списокне тăвăр.

| | | |
|---|---|---|
| Октябрĕн 20-мĕшĕ | тунтикун | Петя Семĕнов |
| „ 21-мĕшĕ | ытларикун | Коля Иванов |
| „ 22-мĕшĕ | юнкун | Галя Петрова |

Çĕршывсен, хуласен, ялсен, юханшывсен, тинĕссен ячĕсене пысăк саспаллипе пуçласа çыраççĕ.

***46-мĕш хăнăхтару.*** Çырса илĕр те çĕршывсен, хуласен, ялсен, юханшывсен, тинĕссен ячĕсене йĕр туртса палăртăр.

Эпĕ Совет Союзĕнче пурăнатăп.
Мускав — пирĕн юратнă тăван хула.
Шупашкар — Чăваш республикин тĕп хули.
Патăръел — Чкаловски районĕн центрĕ.
Çавал шывĕ Атăла юхса кĕрет.
Атăл шывĕ Каспи тинĕсне юхса кĕрет.

Уйăхсен, кунсен ячĕсене пĕчĕк саспаллипе пуçласа çыраççĕ.

***47-мĕш хăнăхтару.*** Кунсен ячĕсене кирлĕ йĕркепе çырса тухăр.

## Кунсен ячĕсем.

Юнкун, тунтикун, вырсарникун, шăматкун, эрнекун, кĕçнерникун, ытларикун.

***48-мĕш хăнăхтару.*** Уйăхсен ячĕсене январьтен пуçласа йĕркипе çырса тухăр.

Май, март, октябрь, февраль, июнь, декабрь, июль, апрель, ноябрь, январь, сентябрь, август.

## 16 §. Япалана пĕлтерекен сăмахсем.

Çакăнта ÿкернĕ тискер кайăксен, вĕçен кайăксемпе килти кайăксен ячĕсене йĕркипе çырса илĕр.



***49-мĕш хăнăхтару.*** Калава çырса илĕр. Точкăсем вырăнне кирлĕ сăмахсене кĕртсе çырăр. Кĕртсе лартмалли сăмахсене калав айне çырса хунă.

## Пирĕн класс.

Пирĕн... пысăк та çутă. Унта... тата класс доски пур. Партăсем умĕнче учитель валли... ларать. Класс кĕтессисенче... лараççĕ. Стена çине илемлĕ... çакнă.

Кирлĕ сăмахсем: *картинăсем, партăсем, сĕтел, чечексем, класс.*



# Калаçу.

1. Шкулта мĕнле япаласем пур? Вĕсене кăтартса парăр, вĕсен ячĕсене калăр.

2. Сирĕн пӳртре мĕнле япаласем пур?

3. Шывра мĕн-мĕн пурăнать? Вăрманта мĕн-мĕн пурăнать?

4. Садра мĕн-мĕн ӳсет? Çимĕç пахчинче мĕн-мĕн ӳсет? Хирте мĕн-мĕн пулать?

***50-мĕш хăнăхтару.*** Хăвăр вĕренекен класри япаласен ячĕсене çырăр.

***51-мĕш хăнăхтару.*** Точкăсем вырăнне *кам?* тесе ыйтăнакан сăмахсене лартăр.

Тумтире (*кам?*)... çĕлет. Пӳрте (*кам?*)... тăвать.

Чирлĕ çынна (*кам?*)... сыватать. Ачасене (*кам?*)... вĕрентет.

Пулла (*кам?*)... тытать. Кайăка (*кам?*)... çӳрет.

Кирлĕ сăмахсем: ***çĕвĕçĕ, пулăçă, сунарçă, платник, врач, учитель.***

***52-мĕш хăнăхтару.*** Çырса илĕр. Точкăсем вырăнне *мĕн?* тесе ыйтăнакан сăмахсене лартăр.

Пĕлĕтрен (*мĕн?*)... çăвать. Пĕлĕтре (*мĕн?*)... çиçет. Сарă (*мĕн?*)... хупланнă. Вăйлă (*мĕн?*)... вĕрет. Çырмара (*мĕн?*)... юхать.

Кирлĕ сăмахсем: *çиçĕм*, *шыв*, *çумăр*, *хĕвел*, *çил*.

***53-мĕш хăнăхтару.*** Çакăнти сăмахсенчен малтан вăрманта мĕн-мĕн пурăннине, унтан вăрманта мĕн-мĕн ӳсни́не çырса илĕр.

1. Вăрманта пурăнаççĕ:
2. Вăрманта ӳсеççĕ:

Хурăн, ăвăс, юман, çăка, пакша, мулкач, шĕшкĕ, упа, кашкăр, хурама, çĕмĕрт, тилĕ, чĕрĕп, çеçпĕл, кăрăç, куккук, вĕрене, ăсан, чăрăш, хыр, чакак, йĕлме.

***54-мĕш хăнăхтару.*** Çак ыйтусене хирĕç япалана пĕлтерекен сăмахсемпе каласа ответ парăр.

Эсир мĕнле-мĕнле килти выльăхсене пĕлетĕр? Мĕнле-мĕнле тискер кайăксене пĕлетĕр? Мĕнле-мĕнле вĕçен кайăксене пĕлетĕр? Мĕнле-мĕнле пулă пĕлетĕр? Мĕнле-мĕнле хурт-кăпшанкă пĕлетĕр?

***55-мĕш хăнăхтару.*** Çак ыйтусем çине ответ парăр.

Эсир мĕнле хуласем пĕлетĕр?
Мĕнле юханшывсем пĕлетĕр?
Сирĕн шкул çывăхĕнче мĕнле ялсем пур?
Хăвăр çывăхри колхозсен ячĕсене каласа парăр.

---

Хуласен, ялсен, юханшывсен, колхозсен ячĕсене мĕнле саспаллипе пуçласа çырмалла?

***56-мĕш хăнăхтару.*** Хăвăр пĕлекен пилĕк хула тата пилĕк ял ятне çырса хурăр.

Тĕслĕх:

*Шупашкар хули.*
*Елчĕк ялĕ.*

***57-мĕш хăнăхтару.*** Малтан çÿтçанталăкри пулăмсене пĕлтерекен сăмахсене (çиçĕм, çил-тăвăл), унтан халăх хушшинчи ĕçсене пĕлтерекен сăмахсене (пуху, вăрçă) çырса илĕр.

Çумăр, çил, пуху, суйлав, аслати, çиçĕм, революци, митинг, çил-тăвăл, шăрăх, тĕтре, вăрçă, демонстраци, ăмăрту, хĕл, кĕр, йĕпе-сапа, сывлăм, асамат кĕперри, съезд, канашлу.

***58-мĕш хăнăхтару.*** Предложенисене çырса илĕр. Точкăсем вырăнне *кама? мĕне?* тесе ыйтăнакан сăмахсене лартăр.

Эпĕ (*кама?*)... выльăх пăхма пулăшатăп.
Эпĕ (*кама?*)... ача садне ăсатса ятăм.
Эпĕ (*мĕне?*)... утă патăм.
Эпĕ (*мĕне?*)... тирпейлĕ тытатăп.
Эпĕ (*мĕне?*)... вараламастăп.
Эсĕ (*кама?*)... чĕнсе кил-ха.

Кирлĕ сăмахсем: *ĕнене, тумтире, кĕнекене, аттене, аннене, йăмăка.*

***59-мĕш хăнăхтару.*** Статьяна çырса илĕр. *Кама?* е *мĕне?* ыйтусемпе ыйтăнакан сăмахсене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр.

## Пиччене ăсатни.

Пирĕн пиччене кăçал Совет Çарне илчĕç. Пиччене ăсатма пĕтĕм ял пухăнчĕ. Комсомолецсем пиччене саламларĕç. Пичче хăйне ăсатма пынă çынсене тав турĕ. Вăл çар ĕçне тăрăшса вĕренме сăмах пачĕ.

***60-мĕш хăнăхтару.*** Предложенисене çырса илĕр. Точкăсем вырăнне *кампа?* е *мĕнпе?* ыйтусемпе ыйтăнакан сăмахсене çырăр.

Вутта (***мĕнпе?***)... çураççĕ.
Каскана (***мĕнпе?***)... татаççĕ.
Çĕре (***мĕнпе?***)... чаваççĕ.
Эпĕ (***кампа?***)... вăрмана кайрăм.
Эсĕ (***кампа?***)... шкула кайрăн.
Эпĕ (***кампа?***)... клуба кайрăм.

Кирлĕ сăмахсем: ***кĕреçепе, пуртăпа, пăчкăпа, юлташпа, аттепе, пиччепе.***

***61-мĕш хăнăхтару.*** Предложенисене çырса илĕр. Точкăсем вырăнне *камăн?* е *мĕнĕн?* ыйтусемпе ыйтăнакан сăмахсене çырăр.

Пирĕн (*камăн*?)... хисеплĕ грамота пур.
Паян (*камăн*?)... отчёт тумалла.
Санăн (*камăн*?)... велосипечĕ çĕнĕ.
Сирĕн (*мĕнĕн*?)... ферми пысăк.
Шыври (*мĕнĕн*?)... урисем çук, çуначĕсем пур.
Вăрманти (*мĕнĕн*?)... вулли тӳрĕ пулать.
(*Мĕнĕн*?)... юрри илемлĕ.
Хĕлле (*мĕнĕн*?)... ăшши сахал.
Кирлĕ сăмахсем: ***шăпчăкăн, пуллăн, йывăçăн, хĕвелĕн, аттен, пиччун, колхозăн, бригадирăн.***

***62-мĕш хăнăхтару.*** Тупмалли юмахсене çырса илĕр. *Мĕнĕн?* ыйтупа ыйтăнакан сăмахсене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр.

Тимĕр йыттăн сӳс хӳре. Пĕчĕкçĕ хуранăн пătти тутлă. Тăватă тăванăн пĕр çĕлĕк. Пӳртĕн кĕме-тухма шăтăк çук, ăшĕнче пин çын пурăнать.

Пĕр йывăçăн пилĕк турат. Тислĕк çунин турти çук. Пĕр шăшин икĕ хӳре. Хĕрĕх йывăçăн пĕр тăрă. Пĕр çĕлĕкĕн хĕрĕх саплăк. Пĕр сăхманăн çичĕ шăтăк.

***63-мĕш хăнăхтару.*** Предложенисене çырса илĕр. *Камра?* е *мĕнре?* е *ăçта?* ыйтупа ыйтăнакан сăмахсене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр.

Çулла урапара, хĕлле çунара.

Плугра та çӳрет, сӳрене те туртать.

Çуначĕ пур—сывлăшра вĕçеймест.

Сывлăшра та вĕçет, шыврa та ишет.

Ман кĕнеке юлташра.

***64-мĕш хăнăхтару.*** Предложенисене çырса илĕр. *Камран?* е *мĕнрен?* е *ăçтан?* ыйтупа ыйтăнакан сăмахсене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр.

Ĕçрен ан хăра, вăл хăй санран хăратăр.

Çиекен выльăх çултан юлман.

Сывлăшсăр пурнаймасть, шывран тухаймасть.

Çĕршыва сыхларăм тăшмантан, салам илтĕм Сталин юлташран.

Япалана пĕлтерекен сăмахсен ыйтăвĕсем: *кам*? *мĕн*? *камăн*? *мĕнĕн*? *кама*? *мĕне*? *кампа*? *мĕнпе*? *камра*? *мĕнре*? *камран*? *мĕнрен*?

Япалана пĕлтерекен сăмахсене çав ыйтусем тăрăх пĕлме пулать.

***65-мĕш хăнăхтару.*** Сăвва вуласа тухăр та ыйтусем çине ответ парăр.

## Çуллахи ир.

Хĕрлĕ шурăмпуçĕ
витрĕ пĕлĕте.
Авваскать кĕтӳçĕ
ĕнисем патне.
Пулăçсем пыраççĕ
лăпкă шыв хĕрне.

Вăлтасем яраççĕ
авăр тĕпнелле.
Халăх хире тухнă
ĕçлеме васкать.
Ак хĕвел те тухрĕ,
савăнать, кулать.

---

Çак сăвăра хăш сăмахсем япалана пĕлтереççĕ?

Çак сăмахсенчен хăшĕ-хăшĕ çынна (этеме) пĕлтереççĕ?

*Кĕтӳçĕ* сăмахăн ыйтăвĕ мĕнле? *Пулăçсем, халăх* сăмахсен ыйтăвĕсем мĕнле? *Шурăмпуçĕ, вăлтасем, хĕвел* сăмахсен ыйтăвĕ мĕнле?

Çынна пĕлтерекен сăмахсем *кам*? ыйтупа ыйтăнаççĕ: *колхозник*, *учитель*, *тракторист*, *бригадир*. Ытти япаласене пĕлтерекен сăмахсем *мĕн*? ыйтупа ыйтăнаççĕ: *лаша*, *ĕне*, *пÿрт*, *пуртă*, *ещĕк*.

***66-мĕш хăнăхтару.*** Калава çырса илĕр. Çынна пĕлтерекен сăмахсене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр.

## Çĕлĕк.

Петĕр ашшĕ çĕлĕкне тăхăннă та хăйне хăй пысăк тесе шухăшланă. Пысăк çĕлĕк унăн сăмси таранах анса ларнă. Петĕр туя илнĕ те урама чупса тухнă. Кÿрши чÿречерен пăхса тăнă. Петĕре курнă та калать: „Эй, çĕлĕк, эсĕ мĕн хăтланатăн? Пирĕн Петĕре ăçта илсе каятăн?"—тет.

## Çулла.

***67-мĕш хăнăхтару.*** Çак картинка çинче ÿкерсе кăтартнă япаласен ячĕсене каласа тухăр.



*68-мĕш хăнăхтару.* Статьяна çырса илĕр. Япалана пĕлтерекен сăмахсене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр.

## Çимĕç пахчи.

Пирĕн çимĕç пахчинче çĕрулми, хăяр, купăста, сухан, кишĕр, помидор, çарăк ÿсет. Кашни кĕркуннех эпир пахчаран темĕн чухлĕ çимĕç пуçтарса кĕретпĕр. Пахчара лартса тунă çимĕçсене хĕлĕн-çăвĕн çиетпĕр.

*69-мĕш хăнăхтару.* Çакăнта кăтартнă çуртсен ячĕсенчен хăвăр ялта мĕн-мĕн пуррине çырса илĕр.

Шкул, больница, аптека, ферма, ял Совечĕ, тимĕрçĕ лаççи, мунча, амбар, арман, лавка, клуб, кино, театр.

*70-мĕш хăнăхтару.* Малтан çулла мĕн пулнине, унтан хĕлле мĕн пулнине çырса илĕр.

Çумăр, юр, пас, тĕтре, пăр, сывлăм, çиçĕм, аслати, çил-тăвăл, çил-тăман, çавра çил.

Тĕслĕх: *Çулла çумăр çăвать.*

*71-мĕш хăнăхтару.* Картинкăсене пăхса тухăр, малтан ĕç хатĕрĕсен ячĕсене, унтан хĕçпăшал ячĕсене çырса илĕр.



## 17 §. Пĕрреллĕ хисеп тата нумайлă хисеп.



хăяр хăярсем кăмпа кăмпасем



чĕпĕ чĕпсем сысна сысnасем

Япалана пĕлтерекен сăмахсем икĕ хисепре пулма пултараççĕ: **пĕрреллĕ** тата **нумайлă** хисепре.

**Пĕрреллĕ хисеп** япала пĕрре анчах пулнине кăтартать: *юман, кăмпа, чĕпĕ.*

**Нумайлă хисеп** япала иккĕ е нумай иккенне кăтартать: *юмансем, кăмпасем, чĕпсем.*

## 18 §. Япала мĕн тунине пĕлтерекен сăмахсем.

***72-мĕш хăнăхтару.*** Вуласа тухăр.

### Колхоз мĕн тăвать?

Çуркунне колхоз ака тăвать, тырă акать. Çулла утă çулать, тырă вырать, авăн çапать. Кĕркунне çĕр-улми кăларать, пахча çимĕçсене пуçтарать.

---

Эсир ёнер мĕн-мĕн турăр? Паян мĕн-мĕн турăр? Халь мĕн тăватăр?

***Акать, çулать, вырать, çапать, кăларать, пуçтарать*** сăмахсем çын е пĕр-пĕр япала мĕн тунине пĕлтереççĕ.

Çав сăмахсем: ***япала мĕн тăвать?*** ыйтупа ыйтăнаççĕ.

***73-мĕш хăнăхтару.*** Çак картинкăсене пăхса тухăр. Кашни мĕн тунине йĕркипе çырса тухăр.

Тĕслĕх: *Тимĕрçĕ тимĕр шаккать.*



***74-мĕш хăнăхтару.*** Ĕçĕ тăрăх япалине пĕлĕр, точкăсем вырăнне унăн ятне çырăр.

Пулă ишет, чăмать.
... вĕçет, чĕвĕлтетет.
... кĕçенет, чупать.
... вĕрет, хăрлатать.

Комбайн вырать, çапать, сăвăрать.
... вулать, çырать, шутлать.
... тухать, хăпарать, ăшăтать, анса ларать.
... çăвать, йĕпетет, çĕре нӳрлентерет.
... утать, ишет, вĕçет, какалать.

***75-мĕш хăнăхтару.*** Япалана пĕлтерекен сăмахсем çумне вăл мĕн тунине кăтартакан сăмахсене çырса парăр.

Тĕслĕх: *Хĕвел пăхать.*

Хĕвел... Çил... Шыв... Çумăр... Автан... Вăрман... Пулă... Аэроплан... Тырă... Пыл хурчĕ...

Кирлĕ сăмахсем: *юхать, вĕрет, авăтать, сĕрлет, ӳсет, вĕçет, çăвать, кашлать, ишет.*

***76-мĕш хăнăхтару.*** Çак предложенисене çырса илĕр. Точкăсем вырăнне япаласем мĕн тунине пĕлтерекен сăмахсем çырăр.

Тимĕрçĕ шаккать. — Тимĕрçĕсем шаккаççĕ.
Çĕвĕçĕ çĕлет. — Çĕвĕçĕсем...

| | |
|---|---|
| Ача вылять. | Ачасем... |
| Йывăç ӳсет. | Йывăçсем... |
| Автан авăтать. | Автансем... |
| Кайăк юрлать. | Кайăксем... |
| Хур какалать. | Хурсем... |
| Çерçи чĕвĕлтетет. | Çерçисем... |
| Пӳрт ларать. | Пӳртсем... |
| Хыр кашлать. | Хырсем... |
| Арман авăрать. | Армансем... |

***77-мĕш хăнăхтару.*** Предложенисене вуласа тухăр, унтан çырса илĕр. Япала мĕн тунине пĕлтерекен сăмахсем умĕн кирлĕ ыйтусем лартăр.

Тĕслĕх: *Хĕвел (мĕн тăвать?) тухать.*
*Кайăксем (мĕн тăваççĕ?) юрлаççĕ.*

Хĕвел тухать. Çутçанталăк чĕрĕлет. Кайăксем юрлаççĕ. Хирте кĕтӳ çӳрет. Урамра ачасем выляççĕ. Пĕвере кăвакалсем ишеççĕ. Аякра жнейка кĕрлет. Хирте колхозниксем ĕçлеççĕ.

***78-мĕш хăнăхтару.*** Предложенисене çырса илĕр. ***Мĕн турĕ?*** е ***мĕн тунă?*** ыйтупа ыйтăнакан сăмахсене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр.

1. Енер вăйлă çумăр çурĕ. 2. Пионерсем çулла лагерьте пурăннă. 3. Колхоз ĕçкунĕсем тăрăх тырă валеçрĕ. 4. Çу иртрĕ, кĕр çитрĕ. 5. Кураксем ăшă еннелле вĕçсе кайрĕç. 6. Вăрман çаралнă. 7. Йывăçсен çулçисем тăкăннă. 8. Ачасем паян экскурсине кайрĕç.

***79-мĕш хăнăхтару.*** Предложенисене çырса илĕр. ***Мĕн тăвĕ?*** ыйтупа ыйтăнакан сăмахсене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр.

Часах хĕл çитĕ. Юр çăвĕ. Хир шуралĕ. Çул ӳкĕ. Пире йĕлтĕрпе ярăнма лайăх пулĕ. Шыв шăнĕ. Эпир пăр çинче конькипе ярăнăпăр.

Хирте мулкач çӳрӗ, йӗр тӑвӗ. Сунарçӑ мулкач тытма кайӗ. Хиртен, вӑрмантан мулкачсем тытса килӗ.

***80-мӗш хӑнӑхтару.*** Çак предложенисенче, ***мӗн тӑвать? мӗн тӑваççӗ?*** ыйтусем лартса, япала мӗн тунине пӗлтерекен сӑмахсене тупӑр. Çав сӑмахсене япаласене пӗлтерекен сӑмахсемпе пӗрле çырса илӗр.

Тӗслӗх: *Мускав калаçать.*



Радио хыпарсем пӗлтерет. Вуламалли çуртра колхозниксем лараççӗ. Колхозниксем радио итлеççӗ. Мускав калаçать. Сталин юлташ сӑмах калать.

> Япала мӗн тунине пӗлтерекен сӑмахсен ыйтӑвӗсем: ***мӗн тӑвать? мӗн туре? мӗн тунӑ? мӗн тӑвӗ?*** Çав ыйтусем тӑрӑх япала мӗн тунине пӗлтерекен сӑмахсене тупма пулать.

***81-мӗш хӑнӑхтару.*** Статьяна вуласа тухӑр. Япала мӗн тунине пӗлтерекен сӑмахсене çырса илӗр.

## Пионерсем.

Пионерсене Ленин ачисем теççӗ. Вӗсем Ленин каласа хӑварнисене туса пыраççӗ. Пионерсем тӑрӑшса вӗренеççӗ. Вӗренӳре кая юлаканнисене пулӑшаççӗ. Пионер халӑх-

тăшманĕсене çĕмĕрсе пыма пулăшать. Пионер ĕçхалăхĕн ачисемпе пуринпе те килĕшӳллĕ пурăнать. Пионер мăйне хĕрлĕ галстук çыхса çӳрет.

***82-мĕш хăнăхтару.*** Çак ыйтусем тăрăх тулли ответ парăр.

Çуркунне юр мĕн тăвать?
Çуркунне йывăçсем мĕн кăлараççĕ?
Кĕркунне йывăç çулçисемпе мĕн пулать?
Хĕлле шывпа мĕн пулать?

Тĕслĕх: *Çуркунне юр ирĕлет.*

### 19 §. Калавсем.

## Манăн ĕçсем.

1. Эпĕ çулла мĕн тунă? Ăçта кайнă? Кампа кайнă? Мĕн курнă? Килте мĕн тунă? Кампа ăçта вылянă?
2. Эпĕ кĕркунне мĕн тунă?
3. Эпĕ хĕлле мĕн тунă?
4. Эпĕ çуркунне мĕн тăвăп?

---

Ыйтусен йĕркипе хăвăр ĕçĕрсем çинчен каласа парăр.

## Сирĕн çемьере кам мĕн тăвать.

Санăн аçу ăçта ĕçлет? Çуркунне мĕн тăвать? Çулла мĕн тăвать? Кĕркунне мĕн тăвать? Хĕлле мĕн тăвать?

Аннӳ ăçта ĕçлет? Вăл мĕн-мĕн тăвать?

Санăн пиччӳсем пур-и? Вĕсем мĕн ятлă? Вĕсем миçе çулта? Вĕсем мĕн ĕçлеççĕ?

Санăн аппусем пур-и? Вĕсем мĕн ĕçлеççĕ?

Тата сирĕн çемьере кам-кам пур? Вĕсем ăçта ĕçлеççĕ? Кам мĕн-мĕн тăвать?

---

Ыйтусен йĕркипе каласа парăр.

## 20 §. Япала мĕн тунине пĕлтерекен сăмахсем çинчен аса илни.

***83-мĕш хăнăхтару.*** Çак предложенисене çырса илĕр. Ыйтусем вырăнне кирлĕ сăмахсене çырăр.

1. Ĕне (*мĕн?*) парать?
2. Хирте (*мĕн?*) ÿсет?
3. Лаша (*мĕн тăвать?*)
4. Кушак шăшие (*мĕн тăвать?*)
5. Кăвак тÿперен (*мĕн?*) пăхать?
6. Хĕвел (*мĕне?*) ăшăтать?

Кирлĕ сăмахсем: ***хĕвел, çĕре, тырă, сĕт, тытать, чупать.***

***84-мĕш хăнăхтару.*** Тĕслĕхе пăхса, çырса пĕтерĕр.

*Курăка çулаççĕ.* Йĕтĕне... Тырра... Çĕрулмине... Çум курăкне... Пире... Сÿсе... Кăмпана... Задачăна... Çырăва... Картинкăна... Тĕрре...

Кирлĕ сăмахсем: ***тĕртеççĕ, шутлаççĕ, татаççĕ, кăлараççĕ, ÿкереççĕ, çыраççĕ, арлаççĕ, татаççĕ, тĕрлеççĕ, çумлаççĕ, выраççĕ.***

***85-мĕш хăнăхтару.*** Çырса илĕр, ыйтусем вырăнне кирлĕ сăмахсем çырăр.

Шăнкăр-шăнкăр шыв (*мĕн тăвать?*) Хура вăрман (*мĕн тăвать?*). Хура лаша (*мĕн тăвать?*). Колхозник çĕре (*мĕн тăвать?*). Хĕвел хавассăн (*мĕн тăвать?*). Сарă лĕпĕш (*мĕн тăвать?*). Пыл хурчĕсем (*мĕн тăваççĕ?*).

Кирлĕ сăмахсем: ***вĕçет, юхать, кашлать, хартлатать, çутатать, сухалать, сĕрлеççĕ.***

***86-мĕш хăнăхтару.*** Çак статьяран япала мĕн тунине пĕлтерекен сăмахсене япалана пĕлтерекен сăмахсемпе пĕрле çырса илĕр.

Юр ÿкрĕ. Хĕл пулчĕ. Ачасем савăнаççĕ. Петюк çунашкине юсарĕ, урама тухрĕ. Тăвайккине ачасем

пуçтараннă. Петюк та ярăнма чупрĕ. Ун хыççăн Кампур та лăпăстатрĕ.

Т ĕ с л ĕ х:

*Юр ӳкрĕ. Хĕл пулчĕ.*

***87-мĕш хăнăхтару.*** Çак предложенисене, *мĕн тăвать?* ыйтупа ыйтăнакан сăмахсем тупса, çырса пĕтерĕр.

Кайăк йăва... . Хур çунаттисемпе... . Кушак шăши... . Йытă кил... . Чăх çăмарта... . Пăру сĕт... . Платник пура... . Тимĕрçĕ çава... .

К и р л ĕ с ă м а х с е м: *тăвать*, *çавăрать, çапать, туптать*, *сыхлать, ĕçет*, *тытать*, *пурать.*

***88-мĕш хăнăхтару.*** Вуласа тухăр та кашни предложенире япала мĕн тунине пĕлтерекен сăмахсене кăтартса парăр.

Сивĕ пите-куçа чĕпĕтет. Пăрлă йывăççем шавламасăр лараççĕ. Выльăхсем ăшă витере тăраççĕ. Хаяр сивĕпе пӳрт пĕренисем шартлатса çурăлаççĕ. Çынсем вутă хутса пӳртсене ăшăтаççĕ. Çерçисем сивве шăннипе тĕкĕсене сарнă.

***89-мĕш хăнăхтару.*** Ĕçĕсем тăрăх япалисене пĕлĕр.

... вĕçет, чĕвĕлтетет, йăва çавăрать.
... юхать, шавлать, кĕрлет, шăнкăртатать.
... вĕçет, нăрлатать, пыл пуçтарать.
... вĕрет, сикет, йынăшать, кил сыхлать.
... кĕçенет, чупать, юртать.

К и р л ĕ с ă м а х с е м: *çерçи, йытă*, *пыл хурчĕ*, *шыв*, *лаша.*

***90-мĕш хăнăхтару.*** Вуласа тухăр та япалана пĕлтерекен сăмахсене тата вĕсем мĕн тунине пĕлтерекен сăмахсене кăтартса парăр. Сăмахĕсене ыйтусем лартса тупăр.

1. Атăл çинче хум вылять. Нӳрлĕ çил вĕрет. Уйăха пĕлĕтсем хуплаççĕ. Пĕлĕт хушшисенчен çăлтăрсем курăнаççĕ.

2. Çумăр пĕлĕчĕ килсе çитрĕ. Çил вăйланчĕ. Çиçĕм çиçрĕ. Аслати аватрĕ. Çумăр тапранчĕ.

3. Çуркунне пулĕ. Пăр кайĕ. Кайăксем килĕç. Калчасем симĕсленĕç.

*91-мĕш хăнăхтару.* Сăвва вуласа тухăр. Япала мĕн тунине пĕлтерекен сăмахсене çырса илĕр.

Шывсем чакрĕç çырмара,
Атăл шывĕ те хухать.
Кĕтӳ тухрĕ хапхаран
çурхи симĕс улăха.

Çыран çумĕн тăвалла
колхоз хирĕ тăсăлать.
Калча шăтнă чăшăлах,
ешĕл калча, пит паха!

Улăх тăрăх тикĕс çул
выртать, тӳррĕн тăсăлса.
Çу çитсессĕн, тырă-пулă
ларĕ кунта кашласа.

### 21 §. Япала паллисене пĕлтерекен сăмахсем.

## Симĕс пахчара.

Çуркунне пахчара **ешĕл** курăк шăтса тухрĕ. Йывăçсем **çамрăк симĕс** çулçăсем кăларчĕç. Каярахпа улмуççисем **шурă** чечеке ларчĕç. Унтан **симĕс** панулмисем чăмăртанчĕç. **Хĕрлĕ, тутлă** çырласем пиçсе çитрĕç.

---

Статьяри сăмахсемпе каласа парăр:
Мĕнле курăк? Мĕнле çулçăсем? Мĕнле чечек? Мĕнле панулмисем? Мĕнле çырласем?

* * *

Хĕрлĕ галстук мăя çыхрăм,
тухрăм аслă уява.

Çĕнĕ юрă шăрантартăм,
йăтрăм хĕрлĕ ялава.

Сăвăри сăмахсемпе каласа парăр.
Мĕнле галстук? Мĕнле уяв? Мĕнле юрă? Мĕнле ялав?

Япалан паллисене, вăл мĕнлине пĕлтерекен сăмахсен ыйтăвĕ *мĕнле?*

Кашни япалан хăйĕн паллисем пур: тĕсĕ, форми, пысăкăшĕ тата ытти те.

Сĕтел мĕнле?—Пысăк, тăрăхла, тăвата кĕтеслĕ, шурă, . . .

Юман мĕнле?—Пысăк, çӳлĕ, ватă, çирĕп, . . .

Хурăн мĕнле?—Шурă, симĕс, çамрăк, . . .

***92-мĕш хăнăхтару.*** Точкăсем вырăнне япалан тĕсне кăтартакан сăмахсене тупса çырăр. Вĕсене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр.

Тĕслĕх: *Курăк симĕс.*

| | |
|---|---|
| Пир. . . | Пĕлĕт. . . |
| Кăмрăк. . . | Хут. . . |
| Курăк. . . | Сурăх. . . |
| Мулкач. . . | Ĕне. . . |
| Кăмака. . . | Ялав. . . |
| Юр. . . | Хăйăр |
| Калча. . . | Тулă. . . |
| Чечек. . . | Автан. . . |

***93-мĕш хăнăхтару.*** а) Точкăсем вырăнне япала тĕсне кăтартакан сăмахсене çырăр. Кирлĕ сăмахсене аялта çырса панă сăмахсенчен суйласа илĕр.

| | |
|---|---|
| . . . панулми. | . . . тăпра |
| . . . çарăк. | . . . курăк. |
| . . . купăста. | . . . пĕлĕт. |

Кирлĕ сăмахсем: ***кăвак***, ***шурă***, ***сарă***, ***хĕрлĕ***, ***хура***, ***симĕс***.

ă) Сăмахсене вулăр. Точкăсем вырăнне япала мĕнлине кăтартакан сăмахсем тупса калăр.

... арман чулĕ. ... çул.
... йывăç. ... трактор.
... урам. ... пуртă.

Кирлĕ сăмахсем: *вăйлă*, ***туратлă***, *креслă*, *вăрăм*, *çивĕч*, *çаврака*.

***94-мĕш хăнăхтару.*** Предложенисене çырса илĕр. Ыйтусем вырăнне кирлĕ сăмахсем кĕртсе çырăр.

Эпир (*мĕнле?*) улăхпа пыратпăр. Улăхра (*мĕнле?*) чечексем нумай. Пĕлĕт çинчен (*мĕнле?*) хĕвел йăлтăртатса пăхать. Эпир ачасемпе (*мĕнле?*) юрăсем юрлатпăр.

Кирлĕ сăмахсем: *аслă*, ***çутă***, *илемлĕ*, *савăнăçлă*.

***95-мĕш хăнăхтару.*** Сăвăри япала паллисене кăтартакан сăмахсене тупăр. Вĕсем кашни мĕнле япалан паллисене кăтартаççĕ?

Аслă, хăватлă, телейлĕ çĕршыв,
кам сана кăмăллăн савмĕ?
Çутă, хаваслă, хĕвеллĕ çĕршыв,
саншăн хĕвел нихçан анмĕ!

Кăтартса панă паллăсем тăрăх япалана пĕлме пулать.

***96-мĕш хăнăхтару.*** Çак япала паллисене пĕлтерекен сăмахсем çумне япалана пĕлтерекен сăмахсене тупса калăр.

Хĕрлĕ, тутлă, çаврака ...
Аслă, чечеклĕ, симĕс ...
Мăйракаллă, сĕтлĕ, пысăк ...
Ăратлă, пысăк, çӳрен ...
Сивĕ, хаяр ...
Таса, тăрă, кăвак ...

Кирлĕ сăмахсем: *улăх*, *пĕлĕт*, *хĕл*, *ĕне*, *панулми*, *лаша*.

Картинка тăрăх каласа пани.

## Чее ула кураксем.

Йытă ăçта выртнă? Ăна мĕн панă? Вăл ашпа мĕн тăвасшăн пулнă? Йытă ашне мĕнсем курнă? Икĕ ула курак мĕн тума шутланă? Пĕр ула куракĕ мĕн тунă? Тепĕр ула куракĕ мĕн тунă? Ашĕ мĕне лекнĕ? Хăшĕ чеерех пулнă?

Картина тăрăх пĕчĕк калав туса çырăр.



*97-мĕш хăнăхтару*. Çак япаласен паллисене тупса çырăр.

Тилĕ... Кашкăр... Мулкач... Пакша... Сысна... Йытă...

Кирлĕ сăмахсем: *çăткăн, çивĕч, хаяр, чее, хăравçă, мăнтăр.*

***98-мĕш хăнăхтару.*** Панă сăмахсене хире-хирĕçле сăмахсем тупса çырăр.

## Хире-хирĕçле паллăсем.

| | |
|---|---|
| Çамрăк — ватă. | Тарăн — .... |
| Йăваш — .... | Тĕттĕм — .... |
| Вăйлă — .... | Йӳнĕ — .... |
| Çӳлĕ — .... | Анлă — .... |

***99-мĕш хăнăхтару.*** Ыйтусем тăрăх тулли ответсем парăр.

Мĕнле юр ӳкрĕ? Мĕнле хĕл çитрĕ? Мĕнле тăвайккире ачасем ярăнаççĕ? Ачасем мĕнле çунашкасемпе ярăнаççĕ? Мĕнле вăйăсем выляççĕ?

**22 §. Япаласене, япала паллисене тата япала мĕн тунине пĕлтерекен сăмахсем çинчен аса илни.**

***100-мĕш хăнăхтару.*** Сăвва вуласа тухăр. Япалана пĕлтерекен сăмахсене кăтартса парăр.

## Çулталăк хушши.

Шурă юр ирĕлет,
çеçенхир чĕрĕлет,
ешĕл курăк ӳсет...
Вăл хăçан пулать-ши?
Хĕвел хытă хĕртет,
ăшă çил вĕркелет,
сар ыраш çитĕнет...
Ку хăçан пулать-ши?

Хир илемĕ каять,
сĕм вăрман çаралать,
пĕрмай çумăр çăвать...
Вăл хăçан пулать-ши?
Хирсенче юр анчах,
çырмара пăр анчах,
сивĕтет аванах...
Ку хăçан пулать-ши?

***101-мĕш хăнăхтару.*** Предложенисене çырса илĕр. Скобкăра кăтартнă сăмахсене кирлĕ пек улăштарса çырăр.

## Кĕркунне вăрманта.

Эпир (*вăрман*) экскурсине кайрăмăр. Вăрманти (*çутçанталăк*) сăнарăмăр. Кĕркунне (*вăрман*) вĕçен кайăксем сахал. Вĕсем хĕл каçма (*ăшă çĕр*) кайнă.

Эпир (*вăрман*) мулкач куртăмăр.

Эпир (*вăрман*) тĕрлĕ çулçăсем пухса килтĕмĕр.

***102-мĕш хăнăхтару.*** Çак статьяна çырса илĕр. Япалана пĕлтерекен сăмахсене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр.

## Пирĕн кил-çурт.

Пирĕн кил-çурт тирпейлĕ, таса. Мĕн-мĕн çук-ши пирĕн кил-çуртра? Пурте пур. Сăмавар, тĕрлĕ савăт-сапа, радио, патефон, хаçат-журналсем пур. Килкартинче çирĕм-вăтăр чăх, вун-вуник хур çӳрет. Кĕлетре тырă-пулă туллиех.

***103-мĕш хăнăхтару.*** Сăвва вуласа тухăр. Япала мĕнлине пĕлтерекен сăмахсене япалана пĕлтерекен сăмахсемпе пĕрле çырса илĕр.

Тĕслĕх: *Вăйлă çумăр.*

Вăйлă çумăр иртсе кайрĕ,
ăшă хĕвел йăл кулать.
Лăпкă çил вĕрет йăвашшăн.
Çырма тăрăх шыв юхать.
Сĕм вăрман
янăрать хавассăн
тĕрлĕ кайăк сассипе.

Лăпкă çилĕ пит ачашшăн
вылять йывăç çулçипе.
Аслă хир те илемленчĕ.
Çамрăк калча ешерет.
Хресчен кăмăлĕ çĕкленчĕ.
Пур колхозник хĕпĕртет.

***104-мĕш хăнăхтару.*** Çак статьяна вуласа тухăр. Япала мĕнлине пĕлтерекен сăмахсене кăтартса парăр.

## Колхозра.

Колхоз пурнăçĕ пуян. **Тырă-пулă** ăнса пулать. **Выльăх-чĕрлĕх** ăратлă, шултра. Фермăра ĕнесем, сурăхсем, сыснасем, **чăх-чĕп, хур-кăвакал** пур. Кашни колхозникĕн **сĕт-çу, аш-какай** çителĕклĕ. **Кил-çуртсем** тирпейлĕ, таса, ăшă. Кашни килте **хаçат-журнал** пур. **Ача-пăчасем** шкула е ача садне çӳреççĕ.

***105-мӗш хӑнӑхтару.*** Сӑвва вуласа тухӑр. Ялала мӗн тунине пӗлтерекен сӑмахсене кӑтартса парӑр.

## Вӑрманти ҫил-тӑвӑл.

Шавлать, кашлать
сӗм вӑрман,
вӗҫӗ-хӗрри курӑнмасть.
урӑм-сурӑм ҫил тухсан,
чарӑнассӑн туйӑнмасть.
Тапхӑр-тапхӑр ҫил килет,
пӑлтӑр-палтӑр ҫавӑрса.
Тӗттӗм вӑрман ӳхӗрет,
ҫӗре ҫитех авӑнса.

Хура пӗлӗт пӗрмаях
шӑвать вӑрман тӑрринче.
Ярать ҫиҫӗм ҫӗр ҫурсах
хура пӗлӗт хушшинче.

Аҫа ҫапать, шартлатать,
пӗтӗм тӗнче кисренет.
Ҫумӑр ҫырма пек юхать,
лупашкасенче кӗрлет.

***106-мӗш хӑнӑхтару.*** Статьяна ҫырса илӗр. Ялалана пӗлтерекен сӑмахсене аялтан пӗр йӗр туртса, ялала мӗн тунине пӗлтерекен сӑмахсене икӗ йӗр туртса паллӑ тӑвӑр.

## Утар.

Пирӗн асатте вӑрманта колхоз утарӗнче ӗҫлет. Эпӗ асатте патне утара час-часах кайкалатӑп. Хуртсем мана тивмеҫҫӗ, эпӗ вӗллесем хушшипе ерипен ҫӳреме вӗреннӗ. Ӗнер эпӗ асаттене хурт уйӑрма хатӗрленнӗ вӗлле тупса патӑм. Асатте мана ҫавӑншӑн мухтарӗ.

***107-мӗш хӑнӑхтару.*** Сӑвва вуласа тухӑр, ялалана, ялала паллине, ялала мӗн тунине пӗлтерекен сӑмахсене кӑтартса парӑр.

## Симӗс тинӗс.

Кӗмсӗртетрӗ, хӑлтӑртатрӗ
аслати паян ирех.
Ӑшӑ ҫумӑр шӑпӑртатрӗ,
йӑлт шӑварчӗ уй-хире.

Симӗс тинӗс—колхоз уйӗ
выртать анлӑн, таҫтанах.
Ӑнса пулӗ тырӑ-пулӑ,
хӗрсе вырӑпӑр ӑна.

## 23 §. Хытă тата çемçе уçă сасăсем.

*108-мĕш хăнăхтару.* Çак сăмахсенчи уçă сасăсене уйăрса илĕр: ака, урпа, ыраш, ăвăс, поэт, ӳпке, ĕмĕр, ещĕк.

***А*** сасăпа ***е*** сасса танлаштарса пăхăр: хăшĕ хытăрах илтĕнет, хăшĕ çемçерех илтĕнет? Çавăн пекех ***у*** сасăпа ***ӳ*** сасса, ***ы*** сасăпа ***и*** сасса, ***ă*** сасăпа ***ĕ*** сасса танлаштарса пăхăр. Вĕсенчен хăшĕ хытăрах, хăшĕ çемçерех илтĕнет?

> А, ă, у, ы, о сасăсем — хытă уçă сасăсем.
> Э, е, ĕ, ӳ, и сасăсем — çемçе уçă сасăсем.

*109-мĕш хăнăхтару.* Малтан хытă уçă сасăсене, унтан çемçе уçă сасăсене йĕркипе каласа тухăр. Унтан хытă уçă саспаллисене уйрăм, çемçе уçă саспаллисене уйрăм çырса хурăр.

*110-мĕш хăнăхтару.* Çак сăвва çырса илĕр. Хытă уçă саспаллисене аялтан икĕ йĕрпе туртса тухăр.

## Кĕркунне.

Авăн çапать машина,
мăн йĕтеме кисретет.
Хурçă трактор кĕрлени
аякранах илтĕнет.

Эпир, çамрăк ачасем,
куллен шкула çӳретпĕр.
Тĕрĕс çырма, вулама,
шутлама та пĕлетпĕр.

## 24 §. Хытă сыпăксемпе çемçе сыпăксем.

*111-мĕш хăнăхтару.* Çак сăмахсене тăсса, сыпăкăн-сыпăкăн вулăр. Кашни сăмахĕнче миçе сыпăк?

| | | |
|---|---|---|
| çын | çип | кун |
| ар-ча | çе-кĕл | пă-ри |
| кă-ма-ка | сĕ-ре-ке | пу-те-не |

Çак сăмахсенех çырса илĕр. Хытă уçă сасăллă сыпăксене пĕр йĕрпе, çемçе уçă сасăллă сыпăксене икĕ йĕрпе аялтан туртса паллă тăвăр.

*112-мĕш хăнăхтару.* Çак сăмахсене сыпăкăн-сыпăкăн уйăрăр. Хăш сыпăкра хытă уçă сасă пуррине, хăш сыпăкра çемçе уçă сасă пуррине асăрхăр.

Пасар. Пукан. Çĕлĕк. Колхоз. Калча. Вĕрене. Çырла. Курăк. Çимĕç. Хĕвел.

Тĕслĕх: *Па-сар. Ку-рăк.*

Сыпӑкра хытӑ уҫӑ сасӑ пулсан, ун пек сыпӑка **хытӑ сыпӑк** теҫҫӗ.

Сыпӑкра ҫемҫе уҫӑ сасӑ пулсан, ун пек сыпӑка **ҫемҫе сыпӑк** теҫҫӗ.

*Пу-кан, кол-хоз* сӑмахсенчи сыпӑксем — хытӑ сыпӑксем.

*Ҫӗ-лӗк, ҫи-мӗҫ* сӑмахсенчи сыпӑксем — ҫемҫе сыпӑксем.

***113-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫак юптарӑва ҫырса илӗр. Кашни сӑмахне сыпӑкӑн-сыпӑкӑн уйӑрӑр. Хытӑ сыпӑксене пӗр йӗрпе, ҫемҫе сыпӑксене икӗ йӗрпе аялтан туртӑр.

## Мулкачпа чӗрӗп.

Шап-шурӑ мулкач чӗрӗпе калать: „Епле санӑн тумтирӳ йӗплӗ-йӗплӗ, илемсӗр!“ — тет. „Тӗрӗс, — хирӗҫ тавӑрать чӗрӗп. Анчах манӑн йӗппӗмсем мана йытӑпа кашкӑр шӑлӗсенчен хӑтараҫҫӗ. Санӑн шап-шурӑ кӗрӗкӳ сана ҫавӑн пекех усӑ парать-и?“ Мулкач ӑна хирӗҫ нимӗн те чӗнеймерӗ, тет.

***114-мӗш хӑнӑхтару.*** Предложенисем тупса ҫырӑр. Предложенири сӑмахсене сыпӑкӑн-сыпӑкӑн уйӑрӑр. Хӑш сӑмахсенче хытӑ сыпӑксем пулчӗҫ? Хӑш сӑмахсенче ҫемҫе сыпӑксем пулчӗҫ? Хӑш сӑмахсенче хытӑ сыпӑксем те, ҫемҫисем те пулчӗҫ?

### 25 §. Хытӑ сӑмахсем, ҫемҫе сӑмахсем тата хутӑш сӑмахсем.

***115-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫакӑнта ҫырса панӑ сӑмахсене вуласа тухӑр. Вӗсенче уҫӑ сасӑсем мӗнлине асӑрхӑр.

Лаша. Ӗне. Курӑк. Ӳпре. Чӑхӑ. Чӗпӗ. Ҫырла. Тилӗ. Поэт. Хӗвел.

*Лаша* сӑмахра мӗнле уҫӑ сасӑсем?

***Ӗне*** сӑмахра мӗнле уҫӑ сасӑсем? ***Чӑхӑ*** сӑмахра мӗнле уҫӑ сасӑсем? ***Чӗпӗ*** сӑмахра мӗнле уҫӑ сасӑсем?

Сӑмахра уҫӑ сасӑсем пурте хытӑ пулсан, ун пек сӑмаха **хытӑ сӑмах** теҫҫӗ (*ҫырла, чӑхӑ*).

Сӑмахра уҫӑ сасӑсем пурте ҫемҫе пулсан, ун пек сӑмаха **ҫемҫе сӑмах** теҫҫӗ (*тилӗ, чӗпӗ*).

*Пахча, ҫумӑр, ҫыру, трактор*—хытӑ сӑмахсем.

*Вӗрене, пилеш, ӳпре, ӳкерчӗк* — ҫемҫе сӑмахсем.

***116-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫакӑнта панӑ сӑмахсене вуласа тухӑр. Вӗсенче уҫӑ сасӑсем мӗнлине асӑрхӑр.

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| атте | пукане | пӑри | путек | выляни |
| анне | путене | шӑши | кайни | ҫуркунне |
| парне | тӑри | ҫӗрулми | курни | кӗркунне |

***Анне*** сӑмахра ***а*** хытӑ уҫӑ сасӑ, тепри ***е***—ҫемҫе уҫӑ сасӑ. ***Тӑри*** сӑмахра ***ӑ*** хытӑ уҫӑ сасӑ, тепри ***и***—ҫемҫе уҫӑ сасӑ. ***Путене*** сӑмахра ***у*** хытӑ уҫӑ сасӑ, ыттисем — ҫемҫе уҫӑ сасӑсем.

Сӑмахра хытӑ уҫӑ сасӑсем те, ҫемҫе уҫӑ сасӑсем те пулсан, ун пек сӑмаха **хутӑш сӑмах** теҫҫӗ.

***117-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫак хутӑш сӑмахсене кӗртсе, предложенисем тӑвӑр.

Атте, анне, валли, анкарти, улмуҫҫи, ҫӗрулми.

Тӗслӗх: *Лавккаран атте ман валли кӗнеке илсе килчӗ.*

***118-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫак статьяна ҫырса илӗр. Хытӑ сӑмахсене аялтан йӗр туртса паллӑ тӑвӑр.

## Ҫӗлен.

Пирӗн аттепе пичче колхоз ҫаранӗ ҫине утӑ ҫулма кайрӗҫ. Вӗсемпе пӗрле улӑха эпӗ те кайрӑм. Утӑ ҫулакансем ҫаран тӑрӑх ҫулса инҫе кайрӗҫ. Эпӗ йытӑпа пӗрле юлтӑм. Ҫулса пӑрахнӑ курӑк ҫинче йӑваланатӑп. Сасартӑк ман алла темӗн, сивӗскер, перӗнчӗ: эпӗ шартах сикрӗм. Пысӑк ҫӗлен курӑк айӗнчен тухрӗ те ман паталла шуса пырать.

Çав вăхăтра çĕлен çине йытă сиксе ӳкрĕ те ăна тулама пуçларĕ. Пĕр самантра çĕлене татăк-татăк туса хучĕ.

*119-мĕш хăнăхтару.* Çак статьяна çырса илĕр. Çемçе сăмахсене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр.

## Пăлан.

Пăлан сивĕ енче пурăнакан выльăх. Вăл шартлама сивĕсене тӳсет. Вăл апатне те хăех тупса çиет. Юра чавса, юр айĕнчи шăн курăка çиет.

Сивĕ енче пурăнакан çынсем пăлан какайне çиеççĕ. Пăлан сĕтне ĕçеççĕ. Пăлан тирĕнчен тумтир çĕлеççĕ. Çул çине каяс пулсан, пăлансене кӳлсе тухаççĕ. Пăлан сивĕ енчи çынсемшĕн питĕ кирлĕ выльăх.

*120-мĕш хăнăхтару.* Калава вуласа тухăр. Калаври хутăш сăмахсене кăтартса парăр.

## Упа.



Кĕркунне упа вăрман чăтлăхне шала кĕрсе кайрĕ. Унта вăл пĕр чăрăш айне шăтăк чаврĕ. Шăтăк тĕпне вĕтĕ туратсем сарчĕ. Çиеле çапă витрĕ. Унтан шăтăкне кĕрсе выртрĕ.

Хĕл çитрĕ. Пĕтĕм вăрмана юр витсе хучĕ. Çил-тăмансем улама тытăнчĕç. Упа шăтăкне те юр витсе лартрĕ. Анчах упа тĕлĕрсе çеç выртать, шăтăкра ăна ăшă.

### 26 §. Çемçетекен палла (ь) çырасси.

*121-мĕш хăнăхтару.* Çак статьяна вуласа тухăр, унтан çемçетекен паллă (ь) лартнă сăмахсене çырса илĕр.

# Чугун çул.

Совет влаçĕ Канашпа Шупашкар хушшине чугун çул хыврĕ. Чугун çул туни пирĕн республикăн хуçалăхĕпе культурине малалла тата вăйлăрах ӳсме пулăшать. Чугун çул республикăн тĕп хулине — Шупашкара тата районсене ытти чугун çулсемпе çыхăнтарать. Вăл суту-илĕве вăйлатма май парать. Хуласене, ялсене, колхозсене кирлĕ тавара вăхăтра тăратма пулăшать.

Халь ĕнтĕ пире çӳреме те, тĕрлĕ таварсем турттарма та пит аван.

***122-мĕш хăнăхтару.*** Çак сăмахсене кĕртсе, предложенисем тăвăр.

| | | | |
|---|---|---|---|
| савăл | такан | савăт | кăвар |
| кукăль | мăкăнь | кровать | букварь |
| сывлăх | рнкă | кашта | октябрь |
| вырьăх | коньки | атьăр | хальхи |

***123-мĕш хăнăхтару.*** Асăрхăр: ***л, н, т*** сасăсем хытă сăмахсенче мĕнле илтĕнеççĕ? Çемçе сăмахсенче мĕнле илтĕнеççĕ?

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| тылă | ăна | калта | ытла | тат |
| тилĕ | ĕне | килте | итле | тет |

Хупă сасăсем хытă сăмахсенче хытă илтĕнеççĕ, çемçе сăмахсенче çемçе илтĕнеççĕ.

Çемçе сăмахсенче хупă саспаллисене çемçетекен паллăсăрах çемçе вулатпăр: ***килте, çӳлте, тенкел, пирĕн, кĕлет.***

***124-мĕш хăнăхтару.*** Çак сăмахсене вуласа тухăр. Мĕншĕн çӳлти икĕ йĕркери сăмахсенче çемçе хупă сасăсем хыççăн ь паллă лартнă, аялти йĕркесенчи сăмахсенче лартман?

| | | |
|---|---|---|
| халь | супăнь | курать |
| ахаль | мăкăнь | вулать |
| кĕсел | йĕвен | çӳрет |
| хĕвел | ĕçчен | килет |

Хытă сăмахра, хытă сыпăкра хупă сасă çемçе илтĕннине кăтартма çемçетекен паллă (ь) лартаççĕ. Çемçе сăмахра, çемçе сыпăкра çемçе хупă сасă хыççăн *ь* палла лартмаççĕ, мĕншĕн тесен *е*(*э*), *ĕ*, *и*, *ӳ* çемçе уçă сасăсем хăйсемпе юнашар тăракан хупă сасăсене çемçетеççĕ.

***125-мĕш хăнăхтару.*** Çак ваттисен сăмахĕсене (пословицăсене) çырса илĕр.

Халăх сурать — кӳлĕ тăвать, пĕччен сурать — типсех пырать. Ĕмĕр пурăн — ĕмĕр вĕрен. Кам ĕçлемест, çав çимест. Кая юлсан, каю шăтать. Тĕрĕслĕх хĕвелтен те çутăрах.

***126-мĕш хăнăхтару.*** Çак картинăсене пăхса тухăр. Картинăсем айне çырнисене тетрадь çине çырса хурăр.



*тюлень.*







*пукане* *утюг* *тяпкă*

Çырнине вулăр: *е*, *ю*, *я* умĕнчи хупă сасăсем мĕнле илтĕнеççĕ: хытă-и, çемçе-и?

***127-мĕш хăнăхтару.*** Çак сăмахсене кĕртсе, предложенисем тăвăр.

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| путене | парне | тюлень | Ванюк | Маня | вылять |
| путек | асанне | люцерна | Санюк | тяпкă | Лявук |

*Е*, *ю*, *я* сасăсем хăйсен умĕнчи хупă сасса çемçетеççĕ. Çавăнпа та, хытă сăмахра е хытă сыпăкра *е*, *ю*, *я* сасăсем умĕнчи хупă сасăсем çемçе илтĕнеççĕ пулсан та, вĕсем хыççăн *ь* паллă лартмаççĕ.

***128-мĕш хăнăхтару.*** Картинăсене пăхса тухăр. Картинăсем çинче мĕн тунине ӳкернӗ. Картинăсене ят парса, тетрадь çине çырса хурăр.





Çырнине вулăр: *я* умĕнчи хупă сасăсем мĕнле илтĕнеççĕ: хытă-и, çемçе-и?

***129-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫакӑнта ҫырнӑ хытӑ сӑмахсене вуласа тухӑр. Вӗсенче *ч, ҫ* сасӑсем умӗнчи хупӑ сасӑсем мӗнле илтӗнеҫҫӗ: хытӑ-и, ҫемҫе-и?

| | | | |
|---|---|---|---|
| анчах | калча | хупӑлча | шалча |
| мунча | вӑлча | ҫулҫӑ | ҫыратчӗ |

***130-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫак предложенисене ҫырса илӗр. Вӗсенче *ч, ҫ* умӗн хупӑ сасӑсем ҫемҫен илтӗнекен хытӑ сӑмахсене аялтан йӗр туртса паллӑ тӑвӑр.

1. Купӑстана малтан панча[1] ҫине акаҫҫӗ. 2. Пирӗн ялӑн пысӑк укӑлча пур. 3. Пирӗн асатте час-часах юмах ярса кӑтартатчӗ. 4. Пирӗн колхозра ванчӑк плугсем ҫук. 5. Совета пирӗн тӑван ҫӗршывӑн чи тивӗҫлӗ, шанчӑклӑ ывӑлӗ-хӗрӗсене суйлаҫҫӗ.

> *Ҫ, ч* сасӑсем — ҫемҫе хупӑ сасӑсем. Хытӑ сӑмахра *ҫ, ч* умӗн тӑракан хупӑ сасӑсем ҫемҫе илтӗнсен те, вӗсем хыҫҫӑн *ь* паллӑ лартмалла мар.

***131-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫак сӑмахсене кӗртсе, предложенисем тӑвӑр та ҫырса хурӑр. Паллӑ тунӑ сӑмахсене кирлӗ пек улӑштарӑр.

1. **Пахча**, хӑмла, **шалча**, нумай.
2. Ёнер, эпир, анчах, мунча, кӗтӗмӗр.
3. Халь, ахаль, **ларакан,** хисеп, ҫук.
4. **Канаш**, **Шупашкар**, чугун ҫул хывнӑ.

***132-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫакӑнта ҫырнӑ сӑмахсене пӗр-пӗринпе танлаштарса пӑхӑр. Кашни сӑмахӑн вӗҫӗнчи хупӑ сасӑ мӗнле илтӗнет: хытӑ-и, ҫемҫе-и?

| | | |
|---|---|---|
| автомобиль | тюлень | учитель |
| кил | ен | тӗпел |

Пӗрремӗш йӗркери сӑмахсен вӗҫӗнчи хупӑ сасӑсем ҫемҫине пӗлтерме мӗн лартса паллӑ тунӑ? Иккӗмӗш йӗркери сӑмахсен вӗҫӗнчи хупӑ сасӑсем ҫемҫине палӑртма *ь* паллӑ лартнӑ-и?

[1] Панча — купӑстана малтан акса шӑтармалли вырӑн.

***133-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫав сӑмахсенех вуласа тухӑр. Пӗрремӗш йӗркери сӑмахсене иккӗмӗш йӗркери сӑмахсемпе танлаштарса пӑхӑр.

*Автомобиль, тюлень, рельс, учительсем, синька* тата ыттисем те чӑваш чӗлхине вырӑс чӗлхинчен кӗнӗ сӑмахсем. Вырӑс чӗлхинчен кӗнӗ сӑмахсенче ҫемҫе уҫӑ сасӑсем хӑйсен хыҫӗнче тӑракан хупӑ сасӑсене ҫемҫетмеҫҫӗ. Ҫавӑнпа ҫемҫе сӑмахра та *ь* паллӑ лартмалла.

## 27 §. *Э, ю, я* саспаллисене ҫырасси.

***134-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫак сӑвва ҫырса илӗр. ***Э, ю, я*** саспаллиллӗ сӑмахсене аялтан йӗр туртса паллӑ тӑвӑр.

### Тухӑр, тухӑр уява.

Хӗвел тухрӗ хӗрелсе,
ылтӑн хӗмне сирпӗтсе.
Саркайӑксем, шӑпчӑксем
шӑратаҫҫӗ юрӑсем.
Ай-ай кунӗ пит аван.
Тухӑр, тухӑр уява.

Тухӑр, чаплӑ тумланса,
хӗрлӗ ялавсем йӑтса.
Урамсем тӑрӑх каяр,
юрӑсем эпир юрлар,
юрӑ кайтӑр ян та ян,
Майӑн пӗрремӗш паян.

***135-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫак сӑмахсене мӗнле ҫырнине асӑрхӑр.

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| эпир | эх | юрлать | каюра | янӑрав |
| эсир | эрне | юмах | люцерна | япала |
| этем | поэт | юрать | ял | пуян |
| эпӗ | аэроплан | юпа | ялав | мӑя |
| эсӗ | юр | юлташ | уяв | туя |
| эппин | юрӑ | каю | выля | хӑяр |

*Э* саспаллине сӑмах пуҫламӑшӗнче тата уҫӑ сасӑ хыҫҫӑн йотованнӑй мар *е*(*э*) илтӗннӗ чухне ҫыраҫҫӗ.

*Ю* саспаллине *йу* илтӗннӗ ҫӗрте тата ҫемҫе хупӑ сасӑсем хыҫҫӑн у саспалли вырӑнне ҫыраҫҫӗ

*Я* саспаллине *йа* илтӗннӗ ҫӗрте тата ҫемҫе хупӑ сасӑсем хыҫҫӑн *а* саспалли вырӑнне ҫыраҫҫӗ.

***136-мӗш хӑнӑхтару.*** *Э, ю, я* саспаллиллӗ сӑмахсене кӗртсе, предложенисем тӑвӑр. Кирлӗ сӑмахсене 135-мӗш хӑнӑхтаруран илме пултаратӑр.

Тӗслӗх: *Эпир ӗнер кино куртӑмӑр, эсир куртӑр-и?*

***137-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫак сӑмахсене кӗртсе, ултӑ предложени тӑвӑр.

Эрне, эрнекун, эмел, эх, эрешмен.
Тӗслӗх: *Чирлӗ ҫынна эмел параҫҫӗ.*

***Э*** саспаллине урӑх чӗлхерен кӗмен чӑваш сӑмахӗсенче сӑмах пуҫламӑшӗнче анчах ҫыраҫҫӗ.

***138-мӗш хӑнӑхтару.*** *Юмах, юшкӑн, каю, каюра, юрӑ, юлташ* сӑмахсене кӗртсе, ултӑ предложени тӑвӑр.

Тӗслӗх: *Пире асатте час-часах юмах ярса парать.*

***139-мӗш хӑнӑхтару.*** *Яшка, яка, уяв, выля, япала, ясмӑк* сӑмахсене кӗртсе, ултӑ предложени тӑвӑр.

Тӗслӗх: *Петӗр, пирӗнпе выля!*

***Ю, я*** саспаллисене сӑмах пуҫламӑшӗнче те, сӑмах варринче те, сӑмах вӗҫӗнче те ҫыраҫҫӗ.

***140-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫак сӑвва вуласа тухӑр. *Э, ю, я* саспаллиллӗ сӑмахсене ҫырса илӗр.

Эс халех юрласшӑн юрӑ,
эс кулатӑн хаваспа.
Пӗчӗклех эс пит хӑюллӑ,
ӳссен вӗҫӗн сывлӑшра.
Пысӑк сывлӑхпа ӳсетӗн,
ак эс пуҫлӑн вӗренме.

Эпӗ лётчик пулӑп,—тейӗн,
вӗҫме кайӑн пӗлӗте.
Ун чух аса илӗн, хӗрӗм,
эсӗ паттӑр ятсене.
Вӗсем пек вара, хӗвелӗм,
вӗҫӗн инҫете, ҫӳле.

***141-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫак статьяна вуласа тухӑр. *Э, ю, я* саспаллиллӗ сӑмахсене ҫырса илӗр.

## Челюскинецсем.

„Челюскин“ парохода Ҫурҫӗрти Пӑрлӑ тинӗс ҫулне тӗпчеме питӗ аякка янӑ.

„Челюскин“ аякран аякка каять. Ишнӗ май ун ҫулне пысӑк пӑрсем ытларах та ытларах картласа пыраҫҫӗ. Акӑ пысӑк пӑрсем, тискеррӗн шатӑртатса, парохода хӗссе хунӑ. „Челюскинӑн“ сулахай аякки шӑтнӑ. Ҫынсем васкаса пӑр ҫине тухнӑ.

Пароход путнӑ. Ҫынсем пысӑк пӑр ҫинче, юрсем хушшинче тӑрса юлнӑ. Анчах вӗсем пуҫӗсене усса ларман. Пароход путни ҫинчен радио тӑрӑх пӗлтернӗ. Аэроплансем лармалли вырӑн—аэродром васкаса тума тытӑннӑ. Пӑра хырса якатнӑ. Унта ҫӳлӗ юпа лартса хӗрлӗ ялав ҫакнӑ.

Совет правительстви пӑр ҫине тӑрса юлнӑ паттӑрсене ҫӑлма самолётсем янӑ. Совет лётчикӗсем ҫилтӑмансене, хаяр сивӗсене парӑнмасӑр, челюскинецсем патне ҫитнӗ.

Пӑр ҫинчен мӗнпур ҫынсене лартса илсе кайнӑ. Челюскинецсен лагерӗ пулнӑ пӑр ҫинче хӗрлӗ ялав кӑна вӗлкӗшсе юлнӑ.

### 28 §. *Ҫ, ч* хыҫҫӑн хытӑ сӑмахсенче *ы* ҫырасси.

***142-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫак статьяна вуласа тухӑр. Паллӑ тунӑ сӑмахсене ҫырса илӗр.

## Ҫырлана кайни.

Пӗрре эпир вӑрмана **ҫырлана** кайрӑмӑр. Вӑрманта **ҫырла** пит нумай. Ҫӗр **ҫырлине** эпир уҫланкӑсенче, **ҫырма** хӗррисенче **чылай** татрӑмӑр. Пӗр **ҫырма** хӗринче **ҫырла** татнӑ чух мулкач сикрӗ тухрӗ. Эпир ӑна хӑвалама тытӑнтӑмӑр. Анчах ниепле те тытаймарӑмӑр.

*Ç, ч* çемçе хупă саспаллисем хыççăн хытă сăмахра *и* мар *ы* çырмалла.

***143-мĕш хăнăхтару.*** Çак сăмахсене çырса илĕр. *Сыру, çырма, чылай* сăмахсене кĕртсе, предложенисем тăвăр.

Тĕслĕх: *Эпĕ пĕр çыхă çапă илсе килтĕм.*

| | | |
|---|---|---|
| çыхă | çыру | çырать |
| çыхăну | çыран | чылай |
| çывăх | çын | чыслă |
| çырма | çырла | чышкă |

Çак сăмахсене, *ç, ч* хыççăн сиктерсе хăварнă *ы* е *и* саспаллисене кĕртсе, çырса илĕр.

| | | |
|---|---|---|
| ç...нсем | ç...вăх | ç...тĕнӳ |
| ç...хă | ч...лай | ç...вĕт |
| ç...лхе | ч...с | ç...рĕк |
| ç...рĕм | ч...кĕ | ч...пер |

Акă пĕр ç...н кĕперпе
каçса пырать ç...рмапа,
ç...рма урлă каçрĕ те
кĕрсе кайрĕ вăрмана.

## 29 §. Уйăракан ъ, ь паллăсене çырасси.

***144-мĕш хăнăхтару.*** Çак статьяна çырса илĕр: *ъ, ь* паллăллă сăмахсене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр.

## Съезд.

1939-мĕш çулта, март уйăхĕнче, коммунистсен партийĕн вунсаккăрмĕш съезчĕ пулса иртрĕ. Съезд виççĕмĕш пилĕкçуллăхăн планне, партин çĕнĕ уставне сӳтсе яврĕ. Партин Центральнăй Комитечĕн ĕçĕсем çинчен Сталин юлташ доклад турĕ. Съезда пĕтĕм çĕршыв саламларĕ. Съезд çинчен хаçатра çырнă статьясене пурте савăнса вуласа тăчĕç.

*145-мĕш хăнăхтару.* Çак предложенисене вуласа тухăр. Паллă тунă сăмахсене пĕр-пĕрин айне туса çырăр.

1. **Мăръере** çил улани илтĕнет. 2. Ман **кĕсъере** яланах сăмса тутри пур. 3. Шкулта вĕренекенсен ашшĕ-амăшĕсен пухăвĕ пуласси çинчен **объявлени** çапнă. 4. Ĕлĕк хĕрсем **тухъя** тăхăннă. 5. **Марье** инке шыв ăсма кайрĕ. 6. Хаçатра пирĕн шкулти отличниксем çинчен **статья** тухнă. 7. Мана ĕнерхи **пьеса** кăмăла килчĕ. 8. Пирĕн ял **разъездран** инçе мар.

Уйăракан хытă *ъ* палла хытă хупă сасăсем хăйсем хыçĕнчи сыпăкран уйăраммăн илтĕннĕ чухне çыраççĕ.

Уйăракан çемçе *ь* палла çемçе хупă сасăсем хăйсем хыçĕнчи сыпăкран уйăраммăн илтĕннĕ чухне çыраççĕ.

*146-мĕш хăнăхтару.* Çыннăн ашшĕ ятне тĕрĕс çырма вĕренĕр. Çакăнта çырнă ятсене çырса илĕр.

Владимир *Ильич* Ленин.
Тарас *Григорьевич* Шевченко.
Михаил *Юрьевич* Лермонтов.
Константин *Васильевич* Иванов.

## 30 §. Сăмах тĕпĕ.

Вуласа тухăр.

### Çыру.

Палюкăн пиччĕшĕ Совет Çарĕнче пурăнать. Пĕрре Палюк пиччĕшĕ патне **çыру çырма** шутларĕ.

„Савнă пичче,—тесе **çырчĕ** вăл.—Эпĕ халĕ иккĕмĕш класра вĕренетĕп. **Çырма** та, вулама та лайăх пĕлетĕп. Сан патна халь хам ятпа пĕрремĕш **çыру çыратăп**. Эпир аванах пурăнатпăр. Тырă ăнса пулчĕ. Çемьере пурте сывă, сана салам яраççĕ".

Паллă тунă *çыру, çырма, çырчĕ, çыратăп* сăмахсен мĕнле пĕр пек пайĕ пур?

*Çыруçă* сăмах мĕнле сăмахран пулнă-ши?

Сăмахăн улшăнман, ытти çавăн евĕрлĕ сăмахсенче те тĕп пĕлтерĕшне çухатман пайне **сăмах тĕпĕ** теççĕ.

***Атă, атăсем, атăçă, атăлăх.***

Сăмах тĕпĕнчен çав сăмах евĕрлĕ, унпа тăванлă ытти сăмахсем пулаççĕ.

Сăмаха улăштарма е пĕр сăмахран тепĕр сăмах тума сăмах тĕпĕ çумне хушакан сыпăксене **аффикссем** теççĕ.




***147-мĕш хăнăхтару.*** Кашни йĕркере панă сăмахсен тĕпне тупăр.

1. Ĕç, ĕçле, ĕçлекен, ĕçлĕ, ĕçпе, ĕçлетĕп.

2. Майлă, майсăр, май, майла, майлакан.

***148-мĕш хăнăхтару.*** Ӳкерчĕке пăхса тухăр. *Пуç* тĕпрен пулнă сăмахсене вуласа тухăр.

***149-мĕш хăнăхтару.*** Çакăнти евĕрлĕ йывăç ӳкерĕр. Йывăç тымарĕ çине ***куç*** тесе çырса хурăр, туратсем çине çак тĕпрен пулнă хăвăр пĕлекен сăмахсене çырăр.

Темиçе сăмахăн тĕпĕ пĕр пек пулсан, ун пек сăмахсене **пĕр тĕплĕ сăмахсем** теççĕ.

***150-мĕш хăнăхтару.*** Çак предложенисенче пĕр тĕплĕ сăмахсене тупăр.

1. Тимĕрçĕ тимĕр шаккать. 2. Кĕреçене тимĕртен те, йывăçран та тăваççĕ. Тимĕрĕн усси питĕ пысăк. 4. Тимĕрçĕсем—колхозра питĕ кирлĕ ăстасем.

***151-мĕш хăнăхтару.*** Ҫырса илĕр. Паллă тунă сăмахсенче сăмах тĕпне аялтан йĕр туртса паллă тăвăр.

1. Паян колхоз правленийĕн **ларăвĕ** пулчĕ. **Лару** ҫуракине тухасси ҫинчен сӳтсе яврĕ. **Ларура** колхоз бригадирĕсем те пулчĕҫ. 2. Пасара кайма тухсан, атте мана **ларчăк** ҫине **ларма** хушрĕ. „Эсĕ ямшăкра **лараканни** пулăн",—терĕ вăл. Эпĕ улăхса **лартăм** та тилхепе тытса пытăм.

***152-мĕш хăнăхтару.*** Ҫырса илĕр. Пĕр тĕпрен пулнă сăмахсенче сăмах тĕпне йĕр туртса паллă тăвăр.

1. Ҫулла кун вăрăм. 2 Колхозниксем кунĕпех хиртеĕҫлеҫҫĕ. 3. Кĕркунне кунсеренех кун кĕскелсе пырать. 4. Эпир виҫĕ кунлăха экскурсие каятпăр, виҫĕ кунччен пире ан кĕтĕр. 5. Пирĕн пичче колхозра кашни кунах икĕ ĕҫкунĕ тăвать.

***153-мĕш хăнăхтару.*** Ҫакăнти кашни юпари сăмахсене пăхса тухăр. Кашни юпари сăмахсен мĕнле пĕр пек пайсем пур?

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| шав | шыв | тĕп | йĕр | пăр |
| шавлă | шывлă | тĕплĕ | йĕрлĕ | пăрлă |
| шавлать | шывак | тĕпсĕр | йĕрсем | пăрлăх |

***154-мĕш хăнăхтару.*** Ҫак сăмахсене ҫырса илĕр. Кашни юпари сăмахсен пĕр пек пайĕсене аялтан йĕр туртса тухăр.

| | | |
|---|---|---|
| ан | ҫил | ăс |
| анлă | ҫиллĕ | ăслă |
| ансăр | ҫилсĕр | ăссăр |

***155-мĕш хăнăхтару.*** Ҫакăнта панă сăмахсемпе пĕр пек пайлă сăмахсене хăвăр тупăр, вăл сăмахсене ҫырăр.

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| пуҫ | куҫ | йыш | лар | ҫу |
| пуҫ.. | куҫ... | йыш... | лар... | ҫу... |
| пуҫ... | куҫ... | йыш... | лар... | ҫу... |

## 31 §. Сăмахри ударени.

***156-мĕш хăнăхтару.*** Çак сăмахсене мăшăрăн-мăшăрăн вуласа тухăр. Паллă тунă саспаллисене вăйлăрах сасăпа калăр.

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| а́лă | кŷ́рăк | хŷ́лă | ка́шкăр | хŷ́рăн |
| ала́ | кура́к | хула́ | кăшка́р | хура́н |

***157-мĕш хăнăхтару.*** Çак предложенисене вулăр. Кашни предложенире паллă тунă пĕр пекрех сăмахсене тупăр. Кашни паллă тунă сăмах мĕне пĕлтернине каласа парăр.

Юр **çунă** та, **çуна** çулĕ ŷкнĕ.
Эпĕ **курăс** хутнине кайса **курас** терĕм.
**Курăк** çинче **курак** çŷрет.
Эсир те **вулăр**, эпир те **вулар**.
Алшăллие **тĕрлĕ** тĕслĕ çиппе **тĕрле**.

***158-мĕш хăнăхтару.*** Çак сăмахсене сыпăкăн-сыпăкăн вуласа тухăр. Паллă тунă уçă сасса вăйлăрах сасăпа вулăр.

Авт*а*н, çыр*у*, ыр*а*ш, ŷпр*е*, ка*ю*, пиç*е*н, тухъ*я*, по**э**т.

Кашни сăмахра пĕр сыпăкне вăйлăрах сасăпа калаççĕ. Çав сыпăкра уçă сасă çинче **ударени** пулать. Ударение кирлĕ чухне (′) паллăпа кăтартаççĕ.

***159-мĕш хăнăхтару.*** Çак сăмахсене вуласа тухăр. Ударение хăш сыпăк çине лартса пынине асăрхăр.

| | | | |
|---|---|---|---|
| пăша́л | йы́вăç | ха́чă | са́внăç |
| çĕме́л | кŷ́рăс | пе́кĕ | пŷ́рнăç |
| кĕлте́ | ы́вăс | и́ккĕ | ăмăртŷ́ |
| кĕпе́р | ка́нтăр | ви́ççĕ | вĕçе́ççĕ |

***160-мĕш хăнăхтару.*** Сăвва çырса илĕр. Сăмахсем çине кирлĕ çĕре ударени лартăр. Пĕр сыпăклă сăмахсенче ударени лартма кирлĕ мар.

## Çурхи вăрман.

Çурхи симĕс вăрмана
кайса куртăмăр паян.
Унта юрă шăранать,
кайăк сасси—ян та ян.

Эпир пухрăмăр чечек,
хамăр пек вĕсем чечен.
Вутăн-хĕмĕн вĕлкĕшсе,
илĕртеççĕ куççене.

Килсе çитрĕç шăпчăксем—
пирĕн кĕтнĕ хăнасем.
Шăппăн-шăппăн ларма мар,
юрă-кĕвĕ шăратма.

Çĕмĕрт шап-шур тахçанах
чечекре ларать палан.
Çурхи симĕс вăрмана
кайса куртăмăр паян.

***161-мĕш хăнăхтару.*** Çак статьяна вуласа тухăр. Паллă тунă сăмахсенче ударени ăçта ларнине асăрхăр.

## Çулпуçа ăсатни.

Владимир Ильич Ленин 1924-мĕш çулта январĕн 21-мĕшĕнче *Гóрки* ятлă ялта вилнĕ. Унăн ӳтне Мускава илсе пынă.

Хула варринелле тĕрлĕ урамсенчен халăх пит йышлăн утнă. Вĕсем вăрăм *лéнта* евĕрлĕ тăсăлса кайнă.

*Мýзыка* сасси илтĕннĕ. Пытару маршне каланă. Темĕн чухлĕ *рабóчисемпе* ĕççыннисем хăйсен юратнă çулпуçне юлашки хут курма пынă.

Январĕн 27-мĕшĕнче *Лéнин* ӳтне Хĕрлĕ *плóщаде* йăтса кайнă. Шăп тăватă сехетре ăна пытарнă.

Çав самантра пĕтĕм çĕршыври мĕнпур *фáбрика, завóд, паровóз гудóкĕсем* хурлăхлăн кăшкăртса янă.

***162-мĕш хăнăхтару.*** Çакăнта çырса панă сăмахсене вуласа тухăр. Вĕсенче ударени ăçта иккенне асăрхăр.

| | | |
|---|---|---|
| Предложéни | пóезд | революци |
| респýблика | паровóз | Конститýци |
| экскýрси | колхóзник | комсомóлец |
| автомобиль | рабóчи | пионéр |
| автóбус | разъéзд | арифмéтика |

Ҫак сăмахсем чăваш чĕлхине урăх чĕлхерен кусна. Вĕсене тĕрĕс вулас тесен, вĕсен ударенине астăвас пулать.

***163-мĕш хăнăхтару.*** Ҫак сăмахсене ҫырса илĕр. Паллă туна саспаллисем ҫине ударени (′) лартса пырăр.

| | | |
|---|---|---|
| р*а*ма | р*а*дио | уч*и*тельница |
| п*а*рта | п*о*езд | аэропл*а*н |
| тетр*а*дь | карт*и*на | пион*е*рка |
| р*у*чка | каранд*а*ш | комсом*о*лка |
| доск*а* | пис*а*тель | коммун*и*стка |
| пальт*о* | агрон*о*м | автомаш*и*на |
| *ё*лка | уч*и*тель | уд*а*рница |
| *я*сли | инсп*е*ктор | бригад*и*р |
| ут*ю*г | телеф*о*н | конфер*е*нци |
| щ*ё*тка | комм*у*на | телегр*а*мма |
| ф*е*рма | разв*е*дка | октябр*ё*нок |
| тр*а*ктор | лин*е*йка | интернацион*а*л |
| с*у*мка | жн*е*йка | постановл*е*ни |

## 32 §. Янăракан хупă сасăсемпе янăраман хупă сасăсем.

***164-мĕш хăнăхтару.*** Ҫак сăмахсене вулăр. Паллă туна хупă сасăсем мĕнле илтĕннине асăрхăр.

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| а*л*а | пичче*м* | а*н*а | ҫăкă*р* | сара*й* | а*в*тан |
| а*л*ăка | ҫĕкле*м* | ă*н*а | сахă*р* | вă*й* | ше*в*ле |
| я*л* | а*м*бар | ава*н* | хăя*р* | *й*ĕп | ша*в* |
| хĕве*л* | ите*м* | йĕве*н* | йĕ*р*ке | че*й* | йĕке*в* |

*Л, м, н, р, й, в* хупă сасăсем кирек хăҫан та янăраса илтĕнеҫҫĕ, вĕсене **ялан янăракан хупă сасăсем** теҫҫĕ.

***165-мӗш хӑнӑхтару.*** Ялан янӑракан хупӑ сасӑллӑ сӑмахсем кӗртсе, тӑвата предложени тӑвӑр.

Тӗслӗх: *Эпир хӗлле йӗлтӗрпе тата конькипе ярӑнаттӑмӑрччӗ.*

***166-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫакӑнта паллӑ тунӑ сӑмахсене кӗртсе, кӑтартса панӑ евӗрлӗ тӗслӗхсем тупӑр.

Тӗслӗх: *Звонок сасси. Звонок пулчӗ.*

| | | |
|---|---|---|
| *арбуз* пахчи | *звонок* сасси | *журнал* листи |
| *пас* йӑлтӑркки | *свисток* шӑхӑртни | *шурлӑх* вырӑн |
| *горн* сасси | *чана* чӗппи | пирӗн *делегат* |
| *карӑш* йӑви | *пӑтавкка* тӗпӗ | *текерлӗк* кайӑк |

***167-мӗш хӑнӑхтару.*** Хӑлхӑрсене ывӑҫ тупанӗсемпе хуплӑр, *ж-ш, з-с, в-ф* сасӑсене мӑшӑрӑн-мӑшӑрӑн каласа пырӑр. Хӑш сасӑсене каланӑ чухне хӑлхара янӑрани илтӗнет? Хӑш сасӑсене каланӑ чухне янӑрав ҫук, шав анчах илтӗнет? Ҫакӑн пек сӑнавах *б-п, г-к, д-т* сасӑсемпе тӑвӑр.

*Б, г, д, ж, з* сасӑсене каланӑ чухне сасӑ янӑрать, вӗсене **янӑракан хупӑ сасӑсем** теҫҫӗ.

*К, п, т, ф, ш, щ, х, ц, ч, с, ҫ* сасӑсене каланӑ чухне сасӑ янӑрамасть, ҫавӑнпа вӗсене **янӑраман хупӑ сасӑсем** теҫҫӗ.

***168-мӗш хӑнӑхтару.*** Мӑшӑрлӑ янӑракан тата янӑраман хупӑ сасӑсен таблицине тетрадь ҫине ҫырса илӗр.

Янӑракан тата янӑраман хупӑ сасӑсен мӑшӑрӗсем:
Янӑракан хупӑ сасӑсем: *б, г, д, ж, з.*
Янӑраман хупӑ сасӑсем: *п, к, т, ш, с.*

***169-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫак предложенисене вуласа тухӑр. Ялан янӑракан хупӑ сасӑсене аялтан йӗр туртса паллӑ тӑвӑр.

1. Ҫил чухне ҫил арманӗсем авӑраҫҫӗ.
2. Ҫураки апрель уйӑхӗн вӗҫӗнче пуҫланать, май уйӑхӗнче пӗтет.

3. Хёлле йёлтёрпе ярӑнма аван.
4. Иртсе пырать сивӗ хӗл, ҫывхарать ҫуркунне.
5. Хура вӑрман хумханать.
Хура лаша хартлатать.
— Хура лаша, ан хартлат,
хурамаран ма хӑран?

*170-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак предложенисенчи янӑракан хупӑ сасӑллӑ сӑмахсене ҫырса илӗр. Янӑракан хупӑ сасӑсене аялтан йӗр туртса паллӑ тӑвӑр.

1. Звонок сасси янӑрать. 2. Гудок сасси илтӗнет. 3. Эпир клуба кино курма кайрӑмӑр. 4. Урампа колхозӑн грузовикӗ иртсе кайрӗ. 5. Пирӗн журналта пӗчӗк калавсем пичетленеҫҫӗ. 6. Большевиксен партийӗн вунсаккӑрмӗш съездӗнче Сталин юлташ доклад тунӑ.

*171-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак предложенисене вуласа тухӑр, унтан ҫырса илӗр. Янӑракан хупӑ сасӑсене аялтан йӗр туртса паллӑ тӑвӑр.

1. Пирӗн задача—колхозсене большевикла, колхозниксене пуян пурӑнакан тӑвасси. 2. Пирӗн бригада ӑмӑртура мала тухрӗ. 3. Лайӑх ӗҫлекен учительсем орден илнӗ. Вожатӑй пионерсене ҫӗнӗ юрӑсем вӗрентрӗ.

## 33 §. Вӑрӑммӑн илтӗнекен хупӑ сасӑллӑ сӑмахсене ҫырасси.

*172-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак статьяна ҫырса илӗр. Икӗ саспаллипе ҫырнӑ вӑрӑм хупӑ сасӑллӑ сӑмахсене аялтан йӗр туртса паллӑ тӑвӑр.

### Пирӗн ҫемье.

Пирӗн ҫемьере пилӗк ҫын: атте, анне, пичче, аппа тата эпӗ. Эпӗ чи кӗҫӗнни, иккӗмӗш класра вӗренетӗп. Аппа пиллӗкмӗш класра вӗренет. Пичче ҫиччӗмӗш класра вӗренет. Кӑҫал вӑл ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкултан вӗренсе тухать. Анне колхоз бригадирӗнче ӗҫлет. Атте—тракторист.

Сăмахра сасă вăрăммăн илтĕнсен, икĕ саспалли çыраççĕ. Сăмахран: *пĕрре*, *вуннă*, *аванни*, *анне*, *валли*, *сарри*.

***173-мĕш хăнăхтару.*** Вăрăммăн илтĕнекен хупă сасăллă сăмахсене тупăр, унтан вĕсене çырăр.

***174-мĕш хăнăхтару.*** Вăрăммăн илтĕнекен сасăсене тĕрĕс çырма хăнăхмашкăн çак предложенисене çырса илĕр.

1. Утă пурте пĕр мар: симĕсси, вĕтти, çемçи—лайăхрах; сарăхни, хытти—начар.

2. Колхозра тĕрлĕ тĕслĕ лашасем: кăвакки, çӳренни, турри—пур тĕсли те пур.

3. Сасăллă кино курма нумай çын пынă: ватти-вĕтти мĕнĕпех пуçтарăннă.

***175-мĕш хăнăхтару.*** а) Çакăнти сăмахсене, тĕслĕхсенче кăтартнă пек, *и* умĕнчи хупă саспаллине иккĕлетсе çырăр.

| | | |
|---|---|---|
| *тăлă—тăлли* | *тылă—тылли* | *пăтă—пăтти* |
| вутă—... | çĕçĕ—... | сĕлĕ—... |
| пĕкĕ—... | усă—... | алă—... |
| сăвă—... | сасă—... | пулă—... |
| тилĕ—... | тĕрĕ—... | тулă—... |

ă) Малалли сăмахсенче *и* умĕнчи хупă саспаллине иккĕлетсе çырăр.

| | | |
|---|---|---|
| *ватă—ватти* | *ăшă—ăшши* | *тăрă—тăрри* |
| чĕрĕ—... | хӳтĕ—... | шĕвĕ—... |
| шурă—... | уçă—... | çутă—... |
| сарă—... | çĕнĕ—... | хытă—... |
| сивĕ—... | кивĕ—... | тутă—... |

***176-мĕш хăнăхтару.*** Çак сăмахсенче *и* умĕнчи хупă саспаллисене иккĕлетсе çырăр:

| | | |
|---|---|---|
| *пысăк—пысăкки* | *лайăх—лайăххи* | *шĕвĕр—шĕвĕрри* |
| пĕчĕк—... | ансăр—... | тăвăр—... |
| сахал—... | çăмăл—... | хастар—... |
| тулăх—... | йывăр—... | маттур—... |

***177-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫак сӑвва ҫырса илӗр. Саспаллисене иккӗлетсе ҫырнӑ сӑмахсене аялтан йӗр туртса паллӑ тӑвӑр.

## Поезд.

Рельссем янӑраҫҫӗ,
рельссем чӑнкӑртатаҫҫӗ.
Поезд ҫил пек ыткӑнать.
Поезд малаллах васкать.
Станцине ак ҫывхаратпӑр,
станцие ҫитсе тӑратпӑр.
Анӑр, камӑн анмалла,
пирӗн инҫе каймалла.

*Янӑраҫҫӗ, чупаҫҫӗ, **васкаҫҫӗ*** йышши сӑмахсенче икӗ *ҫ* ҫыраҫҫӗ, ***малалла, килелле*** йышши сӑмахсенче икӗ *л* ҫыраҫҫӗ.

***178-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫак предложенисене ҫырса илӗр. Точкӑсем вырӑнне япала мӗн тунине кӑтартакан сӑмаха нумайлӑ хисепре ҫырӑр.

| | |
|---|---|
| 1. Ача вулать. | Ачасем вулаҫҫӗ. |
| 2. Самолёт вӗҫет. | Самолётсем... |
| 3. Тимӗрҫӗ шаккать. | Тимӗрҫӗсем... |
| 4. Рабочи ӗҫлет. | Рабочисем... |
| 5. Танк шӑвать. | Танксем... |
| 6. Ҫамрӑк вӗренет. | Ҫамрӑксем... |
| 7. Ялав вӗлкӗшет. | Ялавсем... |
| 8. Йывӑҫ ӳсет. | Йывӑҫсем... |
| 9. Ҫӗмел ларать. | Ҫӗмелсем... |
| 10. Ӗҫ ӑнать. | Ӗҫсем... |

***179-мӗш хӑнӑхтару.*** Сӑмахсене ҫырса илӗр. Точкӑсем вырӑнне кирлӗ сӑмахсене ҫырӑр.

| | |
|---|---|
| *Мала—малалла.* | *Кайма—каймалла.* |
| Яла—... | Вулама—... |
| Хулана—... | Ҫырма—... |
| Вӑрмана—.. | Вылям—... |

Пахчана—...
*Киле—килелле.*
Пӳрте—...
Ҫӳле—...
Кӳрше—...
Тӗпеле—...

Савӑнма—...
*Килме—килмелле.*
Ҫитме—...
Ӗҫлеме—...
Вӗренме—...
Пӗлме—...

***180-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫак статьяна ҫырса илӗр. Хупӑ сас-паллине иккӗлетсе ҫырнӑ сӑмахсене аялтан йӗр туртса паллӑ тӑвӑр.

## Колхоз лаши.

Пирӗн колхозӑн ӑратлӑ лашасем нумай. Вӗсенчен чи пахи—Самолёт ятлӑ ӑйӑр. Вӑл ҫинҫе хырӑмлӑ, вӑрӑм та тӳрӗ ураллӑ, ҫӑра ҫилхеллӗ, тикӗс каснӑ хӳреллӗ, илемлӗ мӑйлӑ. Чупас пулсан, ӑна ҫитекен лаша ҫук, ҫиллӗн-тӑвӑллӑн чупать. Ҫавӑнпа ячӗ те унӑн—Самолёт.

***181-мӗш хӑнӑхтару.*** Сулахай енчи сӑмахсене мӗнле ҫырнине асӑрхӑр. Сылтӑм енчи сӑмахсене мӗнле ҫырнӑ?

пуҫ—пуҫ*лӑ*
куҫ—куҫ*лӑ*
мӑй—мӑй*лӑ*
ҫӗлӗк—ҫӗлӗк*лӗ*
кӗрӗк—кӗрӗк*лӗ*
тӗрек—тӗрек*лӗ*
шанчӑк—шанчӑк*лӑ*

алӑ—алӑ*ллӑ*
ура—ура*ллӑ*
хӑлха—хӑлха*ллӑ*
чӗлхе—чӗлхе*ллӗ*
йӗрке—йӗрке*ллӗ*
кӗленче—кӗленче*ллӗ*
ҫырма—ҫырма*ллӑ*

Хупӑ сасӑпа пӗтекен сӑмахсем хыҫҫӑн ***лӑ, лӗ*** сыпӑксене ҫыраҫҫӗ; уҫӑ сасӑпа пӗтекен сӑмахсем хыҫҫӑн ***ллӑ, ллӗ*** сыпӑксене ҫыраҫҫӗ.

***182-мӗш хӑнӑхтару.*** Сӑмахсене ҫырса илӗр. Точкӑсем вырӑнне кирлӗ сӑмахсене ҫырӑр.

*май—майлӑ*
шут—...
вӑрман—...

*арча—арчаллӑ*
калча—...
шалча—...

çаран—...
курăк—...
*пĕлĕт—пĕлĕтлĕ*
чĕнтĕр—...
кĕпер—...
эмел—...
кĕтес—...

çу—...
çыру—...
*кĕнеке—кĕнекеллĕ*
шерепе—...
кĕвĕ—...
ĕне—...
кĕпе—...

***183-мĕш хăнăхтару.*** Çак статьяна çырса илĕр. Хупă сасpаллине иккĕлетсе çырнă сăмахсене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр.

## Ача чухнехи.

Эпĕ пĕчĕк чухне çырмаран тăм илсе килеттĕм те пӳрт тăваттăм. Пӳрт ăшне кăмакине тăваттăм, пуканесем туса лартаттăм. Йĕри-тавра хӳме çавăраттăм. Ах, хам хĕпĕртеттĕм-çке вара!

> ***Килеттĕм***, ***тăваттăм***, ***лартаттăм***, ***хĕпĕртеттĕм*** йышши сăмахсенче икĕ ***т*** çырмалла.

***184-мĕш хăнăхтару.*** *Каяттăм, килеттĕм* йышши сăмахсене хăвăр тупса çырăр. Вĕсенче икĕ *т* çырмаллине астăвăр.

***185-мĕш хăнăхтару.*** Сулахай енчи сăмахсемпе пĕрле *чĕ* сыпăка мĕнле çырнине тата сылтăм енчи сăмахсемпе пĕрле мĕнле çырнине асăрхăр:

лайăх—лайăх*чĕ*
хавас—хавас*чĕ*
сăвăç—сăвăç*чĕ*
пырать—пырат*чĕ*
çĕвĕç—çĕвĕç*чĕ*
çирĕп—çирĕп*чĕ*
тикĕс—тикĕс*чĕ*
симĕс—симĕс*чĕ*

ырă—ырă*ччĕ*
ăста—ăста*ччĕ*
аван—аван*ччĕ*
маттур—маттур*ччĕ*
çăмăл—çăмăл*ччĕ*
кĕске—кĕске*ччĕ*
çавă—çавă*ччĕ*
самай—самай*ччĕ*

Ç̆ӳлерех илсе кăтартнă сăмахсенче сăмах *чĕ* сыпăкпа пĕтет пулсан, хупă сасă хыççăн пĕр ***ч*** çырмалла, уçă сасăпа ялан янăракан *р, л, м, н, й, в* хупă сасăсем хыççăн икĕ *ч* çырмалла.

***186-мĕш хăнăхтару.*** Çак предложенисене çырса илĕр. Точкăсем выранне *чĕ, ччĕ* лартса пырăр.

Тĕслĕх: *Пирĕн кĕтӳре пĕр вăкăр пурччĕ.*

Пирĕн кĕтӳре пĕр вăкăр пур...

Вăл пит усал..., никама та ирттермест..., мĕн куракана тĕкет...

Эпир унтан пит хăраттăмăр..., ăна курсанах тараттăмăр...

## 34 §. *Б, г, д, ж, з, о, ф, ц, щ* саспаллисене çырасси.

***187-мĕш хăнăхтару.*** Вырăс чĕлхинчен кĕнĕ сăмахсенче ***б-п***, *д-т, г-к, ж-ш, з-с, в-ф* сасăсем мĕнле илтĕннине танлаштарса пăхăр.

| | | | |
|---|---|---|---|
| автобус | ударник | журнал | замазка |
| пус | утмăл | шурлăх | сас |
| бригадир | грузовик | завод | калав |
| кĕтмел | пустав | совет | шкаф |

***188-мĕш хăнăхтару.*** Çак статьяна çырса илĕр. *Б, г, д, ж, з* саспаллиллĕ сăмахсене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр.

Ударниксем хĕрсе ĕçлеççĕ. Бригадăсем пĕр-пĕринпе ăмăртаççĕ. Жирнов бригади Захаров бригадипе ăмăртать. Колхозниксем тырра комбайнпа та жнейкăсемпе те выраççĕ. Хирти ĕçе часрах пĕтерме васкаççĕ.

***189-мĕш хăнăхтару.*** Сулахай енчи сăмахсенчи паллă тунă саспаллисене мĕнле каланине сылтăм енчи сăмахсенче паллă тунă саспаллисене мĕнле каланипе танлаштарăр. Хăш

сăмахсенче çав сасăсем янăрамасăр илтĕнеççĕ? Хăш сăмахсенче янăраса илтĕнеççĕ?

| | | | |
|---|---|---|---|
| колхо*з* | колхо*зăн* | плу*г* | плу*гăн* |
| совхо*з* | совхо*зăн* | гара*ж* | гара*жăн* |
| заво*д* | заво*дăн* | клу*б* | клу*бăн* |

Вырăс чĕлхинчен кĕнĕ сăмахсенче сăмах вĕçĕнче янăракан хупă сасăсем янăрамасăр илтĕнеççĕ, анчах çырасса янăракан саспалли çырмалла.

***190-мĕш хăнăхтару.*** Калава çырса илĕр. *Б, г, д, ж, з, о, ф, ц, щ* саспаллиллĕ сăмахсене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр.

## Абросимов пионер.

Абросимов пионерăн ялĕ станцирен инçе мар. Пĕрре Абросимов шкула кайнă чухне чугун çул рельси татăлса кайнине курнă. Çав вăхăтра ытла аякрах мар пассажирски поезд пынă пулнă. Абросимов нумай шухăшласа тăман. Мăйĕнчи хĕрлĕ галстукне салтса илнĕ те патак çине çыхнă. Унтан çак хĕрлĕ галстукран тунă ялавпа вăл поезда сигнал панă.

Поезд чараннă. Поезд çинчен рабочисем аннă та чугун çула юсанă.

***191-мĕш хăнăхтару.*** Çын ячĕсене, хушамачĕсене, хула ячĕсене, çĕршыв ячĕсене çакăн пек çырма вĕренĕр.

| | | |
|---|---|---|
| Андрей Жданов | Ленинград | Испани |
| Михаил Громов | Горький | Абиссини |
| Валерий Чкалов | Воронеж | Турци |
| Алексей Стаханов | Куйбышев | Англи |
| Евдокия Виноградова | Одесса | Франци |
| Мария Демченко | Днепр | Швейцари |
| Владимир Коккинаки | Дон | Швеци |
| Михаил Водопьянов | Днестр | Норвеги |
| Эрнст Тельман | Енисей | Югослави |

| | | |
|---|---|---|
| Салтыков-Шедрин | Обь | Дани |
| Георгий Димитров | Голланди | Греци |
| Вячеслав Молотов | Афганистан | Америка |
| Михаил Кутузов | Африка | Инди |
| Александр Суворов | Австрали | Иран |

*Б, г, д, ж, з, о, ф, ц, щ* саспаллисене вырăс чĕлхинчен кĕнĕ сăмахсенче çыраççĕ.

***192-мĕш хăнăхтару.*** Çак сăмахсене тĕрĕс çырма вĕренĕр:

| | | |
|---|---|---|
| аэроплан | люцерна | радио |
| большевик | марка | революци |
| бригада | машина | республика |
| бригадир | милиционер | рожок |
| вожатăй | мотор | союз |
| горн | пассажир | социализм |
| гудок | почта | организаци |
| грамматика | правительство | общество |
| директор | приговор | телеграмма |
| дирижабль | пристань | цифра |
| договор | протокол | щётка |
| завод | программа | этаж |
| конституци | пьеса | этажерка |
| коммунизм | рабочи | ярмарка |

## 35 §. Предложени çинчен аса илни.

*Самолёт вĕçет.*
*Ача килте кĕнеке вулать.*

Предложенири сăмахсем пĕр-пĕр шухăша пĕлтермешкĕн пĕр-пĕринпе килĕшӳллĕ çыхăнса тăраççĕ. Вăл çыхăнусене ыйтусем тăрăх кăтартса пама пулать.

1. Самолёт (***мĕн тăвать***?) вĕçет.
   Вĕçет (***мĕн***?) самолёт.
2. Ача килте кĕнеке вулать.

Ача (*мĕн тăвать*?) вулать.
Вулать (*кам*?) ача.
Вулать (*мĕн*?) кĕнеке.
Вулать (*ăçта*?) килте.

***193-мĕш хăнăхтару.*** Ыйтусем вырăнне сăмахсем лартса, предложенисем тăвăр.

Колхозниксем (*ăçта*?) ĕçлеççĕ. Жнейкăпа (*мĕн тăваççĕ*?). (*Камсем*?) кĕлте çыхаççĕ. Кĕлтене (*мĕнпе*?) турттараççĕ.

Кирлĕ сăмахсем: ***хирте***, *колхозницăсем*, *выраççĕ*, *урапапа*.

Пĕр-пĕринпе килĕшӳллĕ çыхăнса тăмашкăн хăш-пĕр сăмахсем улшăнаççĕ.

***194-мĕш хăнăхтару.*** Аялта кăтартнă сăмахсенчен предложенисем тăвăр. Сăмах вĕçĕсене предложенире кирлĕ пек улăштарăр. Паллă тунă сăмахсене ан улăштарăр.

1. Чĕрĕл, **хура, вăрман.**
2. **Тăри, илтĕнет,** юрă.
3. Кил, **ырă, çуркунне.**
4. **Хĕвел**, тĕнче, **савать.**
5. **Колхозниксем**, çураки, **тухнă.**
6. Хир, **ĕç, вĕрет.**
7. **Бригадăсем**, ăмăрт, **ĕçлеççĕ.**

## 36 §. Подлежащи.

*Халăх хирте ĕçлет.*
*Хĕвел савать тĕнчене.*

Пирвайхи предложенире кам çинчен каланă?
Иккĕмĕш предложенире мĕн çинчен каланă?
*Ĕçлет*—кам? *Савать*—мĕн?

Предложенире кам е мĕн çинчен каланине пĕлтерекен сăмаха **подлежащи** теççĕ.

*Халăх*, *хĕвел* сăмахсем—подлежащисем.

Подлежащин ыйтăвĕсем: **кам?** (*халăх*) е **мĕн?** (*хĕвел*).

*195-мĕш хăнăхтару.* Çак предложенисенче кашниччех подлежащине кăтартса парăр.

1. Тăри юрлать. 2. Шăнкăрав шăнкăртатать. 3. Чăх кăтиклет. 4. Пакша хăвăл ăшĕнче ларать. 5. Упа хăй йĕннинче çывăрать. 6. Выльăхсем ăшă витесенче тăраççĕ. 7. Кушак хăйĕн çурисемпе вылять. 8. Ачасем вăрмана кăмпана кайрĕç. 9. Атте хуларан таврăнчĕ. 10. Анне колхоз пахчине ĕçлеме кайрĕ.

*196-мĕш хăнăхтару.* Çак предложенисене çырса илĕр. Точкăсем вырăнне подлежащисем тупса çырăр.

Тусем çинчен... юхать. Вăрманта... юрлаççĕ. Колхозра... пуçланчĕ. Хирте... канмасăр ĕçлет. Пахчара... чечеке лараççĕ.

Кирлĕ сăмахсем: *кайăксем, шыв, халăх, улмуççисем, çураки...*

*197-мĕш хăнăхтару.* Хавăр тĕллĕн предложенисем тăвăр, подлежащисем аялта панă сăмахсем пулччăр.

Юр, çил, хĕвел. Колхозник, рабочи, пионер. Самолёт, поезд, автомобиль. Калча, шыв, çумăр.

Тĕслĕх: *Автомобиль вĕçтерсе килет.*

## 37 §. Сказуемăй.

### Стена хаçачĕ.

Ачасем класра стена хаçачĕ кăлараççĕ. Палюк хаçата кĕртме çырса панă статьясене вулать. Верук хут хатĕрлет. Кĕтерук картинăсем ўкерет. Петя çырать. Лява статьясене çыпăçтарать.

Картина айĕнче миçе предложени?
Пĕрремĕш предложенире камсем çинчен каланă?
Иккĕмĕш предложенире кам çинчен каланă?
Виççĕмĕшĕнче кам çинчен каланă?



Верук мĕн тăвать? Петя мĕн тăвать? Палюк мĕн тăвать? Кĕтерук мĕн тăвать? Лява мĕн тăвать?

Предложенире подлежащи мĕн тунине кăтартакан сăмаха **сказуемăй** теççĕ.

*Вулать, хатĕрлет, çырать, çыпăçтарать, кăларaççĕ* сăмахсем—сказуемăйсем.

Предложенире сказуемăй подлежащипе çыхăнса тăрать. Сказуемăя *мĕн тăвать*? *мĕн тăваççĕ*? ыйтусем тăрăх тупмалла.

**Подлежащипе сказуемăй** — предложенин **тĕп членĕсем.**

***198-мĕш хăнăхтару.*** Кашни предложенире сказуемăя кăтартса парăр.

Платник пўрт пурать. Çĕвĕç тумтир çĕлет. Тимĕрçĕ плуг юсать. Вĕренекен кĕнеке вулать. Сăвăçă сăвă çырать.

***199-мĕш хăнăхтару.*** Çакăнта панă сказуемăйсем çумне подлежащисем тупса, предложенисем тăвăр.

Янăрать, авăрать, авăтать, кĕрлеççĕ, çиçет, вĕрет, вĕçтерет.

Кирлӗ сӑмахсем: *арман, тракторсем, ҫил, юрӑ, ҫиҫӗм, аслати, ҫил-тӑман.*

***200-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫак предложенисене ҫырса илӗр. Точкӑсем выранне сказуемӑйсене ҫырӑр.

1. Ӗнер эпӗ хулана .... 2. Эпир юлташпа кино .... 3. Хуларан эпӗ поездпа .... 4. Пирӗн пичче заводра .... 5. Эпӗ пичче патне ҫыру .... 6. Пиччерен паян ҫыру .... 7. Атте пухӑва .... 8. Ыран колхоза трактористсем .... 9. Бригадӑсем ӑмӑртса .... 10. Пӗрремӗш бригада паян хире .... .

Кирлӗ сӑмахсем: ***куртӑмӑр, ӗҫлет, килчӗ, килеҫҫӗ, тухрӗ, кайрӑм, таврӑнтӑм, ҫыртӑм, кайрӗ, ӗҫлеҫҫӗ.***

***201-мӗш хӑнӑхтару.*** Предложенисем тупса калӑр. Аялта панӑ сӑмахсем сказуемӑйсем пулччӑр.

Выляҫҫӗ, чупать, вуланӑ, чӗвӗлтетеҫҫӗ, ҫулаҫҫӗ, выраҫҫӗ, ҫыраҫҫӗ, авӑртаҫҫӗ, пӑхаҫҫӗ, тӗртет, арлать, ҫӑвать, ӳсет, пиҫет, шавлать, вӗҫет.

Тӗслӗх: *Анне пир тӗртет.*

***202-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫак предложенисене ҫырса илӗр. Кашни предложенире подлежащипе сказуемӑя тупӑр. Подлежащие пӗр йӗрпе, сказуемӑя икӗ йӗрпе аялтан туртӑр.

## Депутатсене суйлани.

Ирхине ултӑ сехетре суйлав пуҫланчӗ. Ҫынсем сасӑлама тытӑнчӗҫ. Ӗҫ ҫыннисем ҫӗршывӑн чи лайӑх ывӑлӗ-хӗрӗсемшӗн сасӑларӗҫ. Суйлав ҫӗрле вуникӗ сехетре пӗтрӗ.

Тӗслӗх: ***Суйлав ҫӗрле вуникӗ сехетре пӗтрӗ.***

***203-мĕш хăнăхтару.*** Çакăнта панă **кашни** япала çинчен вăл мĕн тунине каласа парăр.

Лĕпĕш вĕçет. Сĕтел .... Калча .... Курăк .... Шапа .... Вăрăмтуна .... Сысна .... Вĕлтĕрен .... Шурăмпуç ....

Кирлĕ сăмахсем: *ларать, ӳсет, нăйлатать, пĕçертет, ешерет, сикет, нăриклетет, килет.*

***204-мĕш хăнăхтару.*** Çак предложенисенче точкăсем вырăнне сказуемăйсем лартса пĕчĕк калав тăвăр.



Часовой постра.... Аллине вăл винтовка.... Часовой унталла-кунталла тинкерсе.... Вăл тăшман разведчикĕсене.... Часовой начальнике.... Пирĕн салтаксем тăшмансене тыткăна....

Кирлĕ сăмахсем: *тытнă, тăнă, пăхать, курать, чĕнет, илеççĕ.*

## 38 §. Предложенин кĕçĕн членĕсем.

*Хĕвелтухăç хĕрелет.*
*Тĕттĕм вăрман чĕрĕлет.*
*Колхозниксем ирех вăрмана кайрĕç.*

Предложенисене вуласа тухăр.

Пĕрремĕш предложенире подлежащипе сказуемăя кăтартăр. Иккĕмĕш предложенире, виççĕмĕшĕнче подлежащипе сказуемăя кăтартăр.

Иккĕмĕшпе виççĕмĕш предложенисенче подлежащипе сказуемăйсăр пуçне тата мĕнле сăмахсем пур?

Вĕсен ыйтăвĕсем мĕнле?

*205-мӗш хӑнӑхтару.* Кашни картинка ҫинчен пӗрер предложени тупса ҫырӑр.



Предложенире подлежащипе сказуемӑйсӑр пуҫне урӑх сӑмахсем те пулаҫҫӗ. Вӗсем е подлежащие, е сказуемӑя ӑнлантарса параҫҫӗ.

Предложенире подлежащие е сказуемӑя ӑнлантарса паракан сӑмахсене **кӗҫӗн членсем** теҫҫӗ.

*Тӗттӗм, ирех, вӑрмана*—кӗҫӗн членсем.

*206-мӗш хӑнӑхтару.* Статьяна вуласа тухӑр. Кашни предложенире подлежащипе сказуемӑя тата кӗҫӗн членсене кӑтартса парӑр.

## Майӑн пӗрремӗш кунӗ аякри ҫурҫӗрте.

Хӗвел кунран кун ҫӳлерех хӑпарать. Ҫӗрсем кӗскелеҫҫӗ. Пӗр тӑтӑшах кун уяр. Хаяр сивӗсем ҫаплах тӑраҫҫӗ-ха.

Акӑ май праҫникӗ те ҫитрӗ. Йӗри-тавра юр выртать. Пысӑккисемпе пӗрле ачасем те митинга тухрӗҫ. Пурте хавассӑн илемлӗ юрӑсем юрлаҫҫӗ.

Митинг пӗтрӗ. Вӗренекенсем шкула радио итлеме кайрӗҫ.

*207-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак предложенисене ҫырса илӗр. Кӗҫӗн членсене аялтан туртса тухӑр.

Ҫурхи хӗвел хӗртсе пӑхать. Ешӗл курӑк шӑтса тухрӗ. Сарӑ, шурӑ, хӗрлӗ чечексем тухрӗҫ. Симӗс улӑх чӗрӗлчӗ. Пӗчӗк ачасем урамра выляҫҫӗ. Шыв хӗрринче

пулăçăсем вăлтапа лараççĕ. Вăрмансенче, садсенче кайăксем юрлаççĕ. Выльăхсем хирте симĕс курăк çисе çӳреççĕ.

***208-мĕш хăнăхтару.*** Çак предложенисене кĕçĕн членсем тупса хушăр.

Пароход пырать. Çил вĕрет. Хумсем хăпараççĕ. Çил лăпланчĕ. Çынсем хĕпĕртерĕç. Пристань курăнчĕ. Пароход кăшкăртрĕ. Пароход чарăнчĕ. Çынсем анчĕç.

Тĕслĕх: *Пароход пырать.* ***Атăл тăрăх пароход пырать.***

**39 §. Вĕреннине аса илсе çирĕплетмелли ĕçсем.**

***209-мĕш хăнăхтару.*** Çак статьяна вуласа тухăр. Кашни предложенире кам е мĕн çинчен каланине кăтартса парăр.

## Хирте.

Таçта çитиех сарăлса выртать аслă хир. Ăçта пăх, унта тырă хумханса ларать. Ыраш пулса çитет. Тулăсем те сараласçĕ. Хуратул шап-шур чечекре ларать.

Ыраш хушшинче çулпа пыракан çынсем кăшт анчах курăнаççĕ. Колхозниксем тырă ăнса пулнишĕн хĕпĕртеççĕ.

***210-мĕш хăнăхтару.*** Калава çырса илĕр; япалана пĕлтерекен сăмахсене аялтан йĕр туртăр.

## Утă çинчи каç.

Сарă хĕвел сăртсем хыçне пытанчĕ. Кăнтăрлахи вĕри сывлăш сулхăнланчĕ. Каç пулчĕ. Вăрман пĕр вăхăтлăха шăпланчĕ. Акă çывăхри катара карăш картлатрĕ. Атăл леш енче кулнă, калаçнă сасăсем илтĕнчĕç.

Йăваш çил вĕрет. Кăвак тӳпере вĕтĕ çăлтăрсем куç хĕсмелле выляççĕ. Вĕтлĕхри хӯшĕсем умĕнче вут çунать. Вут тавра çынсем лараççĕ. Çынсем вăрманти шăпчăк сассине итлеççĕ.

# Вăрманта аташни.

Картинкăна пăхса тухăр.
Унта камсене ӳкерсе кăтартнă? (Ачасене ят парăр.)
Ăçта тата хăçан пулнă ку?
Ачасем халĕ мĕн тăваççĕ?
Ачасем ҫиле каймалли çула мĕнле тупнă?



***211-мĕш хăнăхтару.*** Картинкăпа ыйтусем тăрăх „Эпир вăрманта аташса çӳрени“ ятлă калав туса каласа парăр.

***212-мĕш хăнăхтару.*** Аялта панă сăмахсенчен вăрманта ӳсекен япалана пĕлтерекен сăмахсене анчах çырса илĕр.

Чăрăш, хыр, кавăрç, ыраш, хăва, йĕлме, тулă, пăрçа, утмăлтурат, кăмпа, юман, шĕшкĕ, хурама, сĕлĕ, хуратул, ясмăк, палан, пилеш, вĕрене, çĕрулми, урпа, шур çырли.

Çак сăмахсем хушшинче мĕнле уйрăмлăх пур: *чăрăш—чăрăшлăх, хăва—хăвалăх, çăка—çăкалăх.*

***213-мĕш хăнăхтару.*** Ĕçĕсем тăрăх япалисене пĕлĕр:

çутатать, йăлтăртатать, çунать, шăнкăртатать, ханкăртатать, хăлтăртатать, кăранклатать, янăрать, какалать, шăтăртатать, вĕтĕртетет, чĕпĕтет, шăвать.

***214-мĕш хăнăхтару. Мĕн тăвать?*** ыйту лартса, çак япаласем мĕн тунине калăр:

Мулкач. Кайăк. Лаша. Ĕне. Йытă. Чăх.

***215-мĕш хăнăхтару.*** Çакăнта кăтартнă япаласенчен çĕвĕçе мĕн кирлине çырса илĕр.

Кĕрепле, йĕп, çава, хачă, çĕçĕ, сенĕк, çип, çĕвĕ машини, кĕреçе, плуг, пўрнеске, пурă, лом, пуртă.

***216-мĕш хăнăхтару.*** Çак сăвва вуласа тухăр. Сăвăран япала паллине пĕлтерекен сăмахсене япалана пĕлтерекен сăмахсемпе пĕрле çырса илĕр.

Сивĕ кунсем иртрĕç, ăшă кунсем çитрĕç,
çитрĕ эпир кĕтнĕ ырă çуркунне.
Хура кураксем те, шăнкăрчсем те килчĕç,
чĕвĕлти чĕкеç шăратрĕ юррине.
Сĕм вăрман вăранчĕ, симĕс тум тумланчĕ.
Ырă шăршă сарчĕç тĕрлĕ чечексем.
Анлă, ешĕл улăх чаплăн капăрланчĕ,
улăхра янраççĕ савăк сасăсем.

***217-мĕш хăнăхтару.*** Тĕслĕхе пăхса, хире-хирĕçле паллăсем тупса çырăр.

*Çутă—тĕксĕм.*

| | | | |
|---|---|---|---|
| Шурă—... | Çивĕч—... | Тарăн—... | Хытă—... |
| Сивĕ—... | Инçе—... | Пысăк—... | Вăрăм—... |
| Канлĕ—... | Майлă—... | Çамрăк... | Çўлĕ—... |
| Тăрă—... | Тутлă—... | Тĕплĕ—... | Вăйлă—... |

***218-мĕш хăнăхтару.*** Сăвва çырса илĕр. Паллă тунă сăмахсем япала ятне е япала паллине, е япала мĕн тунине пĕлтернине кăтартса парăр.

Укăлча хыçĕнчи **çутă кўлĕ**
тутлă тĕлĕк курса тĕлĕрет.
Тўпери **çăлтăрсем** илĕртўллĕн

йăр та яр кусса анчĕç çĕре.
Ерипен **çутăлать шурăмпуçĕ.**
**Чӳхенет** кӳлĕри **тăрă шыв.**
**Ĕçлĕ ир пуçланать.** Сывлăш уçă.
Чыс, салам сана, аслă çĕршыв!

***219-мĕш хăнăхтару.*** Çырса илĕр, сиктерсе хăварнă сăмахсене кĕртсе çырăр. Çав сăмахсем мĕне пĕлтернине ăнлантарса парăр.

Пирĕн ялтан аякра мар ... вăрман пур. Вăрманта ... йывăçсем ӳсеççĕ. Кунта ... хурăнсем, ... юмансем, ... хырсем ӳсеççĕ. Вăрманта ... кашкăрсем, ... упасем те тĕл пулкалаççĕ.

Кирлĕ сăмахсем: ***тĕрлĕ***, ***ватă***, ***шурă***, ***пысăк***, ***çăмламас***, ***сăрă***, ***яштака***.

***220-мĕш хăнăхтару.*** Малтан ыйтулла предложенисене, унтан кăшкăрулла предложенисене çырса илĕр.

Ешер, ман хĕвеллĕ çĕршывăм, ялан!
Юрла, шăпчăк, уççăн çĕршыв садĕнче!
Кам халь чĕрипе, чунĕпе те пуян,—
шăпчăк пек юрла эс савăнăç çинчен!
Хĕвел, эсĕ пĕлни чăн-чăн закона?
Хĕвел, эсĕ курни чăн-чăн закона,
Çутăрах санран та сталинла закон.
Ăшăрах санран та телейлĕ закон.

***221-мĕш хăнăхтару.*** Сăвва вуласа тухăр. Ыйтулла предложенисене кăтартса парăр.

## Кам вăл?

Кам пире, шкула пырсассăн,
тĕрлĕ ăса вĕрентет?
Кам пире ялан хавассăн
кăмăлпа кĕтсе илет?

Кам пире тĕрĕс çырмашкăн,
вуламашкăн вĕрентет?
Эпир лайăх вĕреннишĕн
камăн чунĕ хĕпĕртет?

***222-мĕш хăнăхтару.*** Статьяна çырса илĕр. Кашни предложенире подлежащипе сказуемăя тупăр. Подлежащине пĕр йĕрпе, сказуемăя икĕ йĕрпе аялтан туртăр.

## Çуркунне.

Çуркунне çанталăк ăшă тăрать. Тăп-тăрă пĕлĕтре çутă хĕвел йăлтăртатать. Йывăçсем сип-симĕс лараççĕ. Улмуççисем чечеке ларнă. Чечексем çинче пыл хурчĕсем сĕрлеççĕ. Вăрманта кайăксем илемлĕ юррисене шăрантараççĕ. Хирте кĕрхи калчасем ешереççĕ. Çураки пĕтнĕ. Колхозниксем пахчасенче ĕçлеççĕ. Ачасем, шкултан таврăнсан, ашшĕ-амăшĕсене пулăшаççĕ.

***223-мĕш хăнăхтару.*** Предложенисене çырса илĕр. Хытă сăмахсене пĕр йĕрпе, çемçе сăмахсене икĕ йĕрпе аялтан туртăр. Хутăш сăмахсене йĕр туртмасăр хăварăр.

Юхтарса çумăр çăвать. Аслати авăтать. Çиçĕм çиçет. Ванюк хăраса ӳкрĕ. Вăл пӳртрен чупса тухрĕ те амăшне чĕнме пуçларĕ.

Тĕттĕм. Нимĕн те курăнмасть. Аслатийĕ тата хăрушăрах авăтать.

Сасартăк Ванюк тинкерсе итлеме тытăнчĕ: ун ури çумĕнчех такам йынăшни илтĕнет. Вăл аллисене тăсрĕ те йĕпенсе пĕтнĕ анчăк çурине хыпашласа тупрĕ. Ванюкăн хăрани иртсе кайрĕ, вăл килне утрĕ.

***224-мĕш хăнăхтару.*** Сăвва çырса илĕр. Çемçе хупă сасăсем хыççăн **ь** паллă лартнă сăмахсене пĕр йĕрпе, çемçе хупă сасăсем хыççăн **ь** паллă лартман сăмахсене икĕ йĕрпе аялтан туртăр.

## Çуллахи ир.

Хĕвел тухать, улăхать,
вăрман урлă кармашать.
Хирти калча ешерет,
йăваш çилпе хумханать.

Выльăх-чĕрлĕх кĕтӳре
çӳрет хирте, ирĕкре.
Шалча тавра явăнса,
хăмла ӳсет хӳтĕре.

Пахчасенче, садсенче
мăкăнь çеçки çурăлатъ.
Ача-пăча урамра
вăйă вылять, савăнать.

***225-мĕш хăнăхтару.*** Çакăнти сăмахсене тĕслĕхсенче кăтартнă пек улăштарса çырăр.

| | | | |
|---|---|---|---|
| *атă, аттăн атта* | | | *йўçĕ—йўççи* |
| пулă ... | ... | | уçă — ... |
| пăтă ... | ... | | сăрă — ... |
| шăмă ... | ... | | сарă — ... |
| сăнă ... | ... | | тутă — ... |
| тĕрĕ ... | ... | | ăшă — ... |
| çĕрĕ .. | ... | | çĕнĕ — ... |
| тĕвĕ ... | ... | | шĕвĕ— ... |

***226-мĕш хăнăхтару.*** Çакăнти сăмахсене тĕслĕхсенче кăтартнă пек улăштарса çырăр.

| | |
|---|---|
| *шала — шалалла* | *хире — хирелле* |
| улăха — ... | анкартине — ... |
| шыва — ... | киле — ... |
| çырмана -- ... | çĕре — ... |
| вăрмана — ... | çўле — ... |

***227-мĕш хăнăхтару.*** Çакăнти сăмахсене, ***ç, ч*** хыççăн сиктерсе хăварнă ***ы*** е ***и*** саспаллисене кĕртсе, çырса илĕр. Астăвăр: хытă сăмахра ***ç, ч*** саспаллисем хыççăн ***ы*** çыраççĕ, çемçе сăмахра ***и*** çыраççĕ.

| | | |
|---|---|---|
| ç ... ракан | ç ... тмĕл | ч ... кĕ |
| ç ... руçă | ç ... рĕм | ч ... лай |
| ç ... вăх | ç ... хăну | ч ... кмек |
| ç ... рĕп | ç ... рăнтăм | ç ... вĕт |
| ç ... мелли | ч ... сларăмăр | ç ... хă |
| ç ... рансем | ч ... пер | ç ... çĕм |

***228-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫак статьяна ҫырса илӗр. Янӑракан хупӑ саспаллилле сӑмахсене аялтан йӗр туртса паллӑ тӑвӑр.

## Джамбул Джабаев.

Джамбул Казахстан халӑх юрӑҫи пулнӑ. Ҫитмӗл ҫичӗ ҫул хушши юрланӑ Джамбул хӑйне ҫуратса ӳстернӗ халӑх ячӗпе. Джамбул Тӑван ҫӗршыв ҫинчен, Совет Ҫарӗ ҫинчен, Сталин ҫинчен темӗн чухлӗ юрӑ хывнӑ. 1936-мӗш ҫулта Совет правительстви Джамбула Ӗҫлӗх Хӗрлӗ Ялав орденӗ панӑ. 1938-мӗш ҫулта Ленин орденӗ парса наградӑланӑ. Джамбул 1945-мӗш ҫулта вилнӗ.

***229-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫырса илӗр.

Нумай-нумай та урлӑ-пирлӗ
ҫӳрерӗм эпӗ тӗнчере.
Хура вӑрманлӑ, аслӑ хирлӗ
тӑван ҫӗршывӑмӑр хитре.

***230-мӗш хӑнӑхтару.*** Сӑмахсене пӗр йӗркерен тепӗр йӗркене куҫарнӑ чухнехи пек сыпӑкӑн-сыпӑкӑн уйӑрса ҫырӑр.

*Шӑ-пӑр-шӑ-пӑр ҫум-ӑр ҫу-са*
ҫӗр кӑкӑрне шӑварать.
Йывӑҫ-курӑк хавасланса
хӑвӑрт ӳсме тытӑнать.
Колхоз лартнӑ ҫамрӑк вӑрман
лӑстӑртатса силленет.
Улӑх тӑрӑх ешӗл ҫаран
чечексемпе витӗнет.

---

Чувашская
Книжная палата
Ч... ...ом Чувашской АССР

Цена 1 руб. 10 коп.

А. С. ОТАЧКИН

ЧУВАШСКИЙ ЯЗЫК

УЧЕБНИК
ДЛЯ II КЛАССА
НАЧАЛЬНОЙ ШКОЛЫ

ЧУВАШГОСИЗДАТ
Чебоксары — 1951